**Кĕтне хĕрринче – тавралăхĕ хитререн, сывлăшĕ сăваплăран – чун та ирĕлет…** ● *5 стр.*

ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

23(841) №, 2014, çĕртме, 11 Хакĕ ирĕклĕ. 16+

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

**Кивçен пурнăç.** **3** стр.

**Икĕ ача амăшĕ çемçе тетте ыталаса сывăрать…** **4** стр.

**Хĕр ĕмĕрĕпе савăнаймарăм.** **9** стр.

**Аслă Атăл хăех – çур тинĕс.** **10** стр.

**Ыйтни кирлĕ çĕре çиттĕр тесен сăмахсен тăван чĕлхепе янăрамалла.** **11** стр.

## Кинемейсем утă çулма тухаççĕ

Алина ИЗМАН ӳкерчĕкĕ.

Çимĕк хыççăн мĕн ĕлĕкех утă хатĕрлеме тытăннă ял халăхĕ. Çава чашлатнă, лупатка хăйранă сасă кашни картарах янăраса тăнă. Халĕ уйра та, анкартинче те техника кĕрлет, алă вăйĕпе çулакан сахал.

Шупашкар районĕнчи Толикасси кинемейĕсем хĕрӳ ĕççи вăхăтĕнче те Акатуя хатĕрленеççĕ. Пилĕк çул каялла ялти клуба юсаса çĕнетнĕ хыççăн çĕнĕрен уçнă, ăна Роза Михайлова ертсе пыма тытăннă. Çав çулах кунта фольклор ушкăнĕ йĕркеленнĕ. Александр Иванов пултарулăх ертӳçи Шупашкартан килсе репетици ирттерет. Вăл каланă тăрăх, аслă ăрурисемпе ĕçлеме çăмăл, мĕншĕн тесен йĕркене çирĕп пăхăнаççĕ, кирек хăçан та пуçтарăнса çула тухма хатĕр кинемейсем.

Ĕлĕкхи тумтир шыраса Галина Королькова виçĕ яла çитнĕ, Зина Охотникова Çĕрпӳ пасарне ятарласа çăпата туянма кайнă. Ушкăнти 8 хĕрарăмăн та халĕ пир кĕпепе çăпата яланах алă айĕнче.

Елена Федорова выльăх-чĕрлĕх нумай усрать, çулсеренех икĕ пахча çултарать вăл. «Утă яланах çитсе пыраканччĕ, колхозран та туянатăп. Кăçал курăк пĕлтĕрхинчен начартарах, çумăрсăр ӳсеймерĕ. Икĕ ĕне хĕл каçармашкăн сахал мар апат кирлĕ, туянма тивет пулĕ», – палăртать хĕрарăм.

Алевтина Егорова – ултă ача амăшĕ. Тивĕçлĕ канура пулин те фермăра пăрусем пăхать вăл. Унăн яваплăхĕ ĕçре çав тери пысăк, алăра 80 ытла пуç-çке. Тăрăшулăхĕшĕн Алевтина Михайловăна темиçе хутчен те тав хучĕпе чысланă.

Зинаида Карпова Мускавран куçса килнĕ хыççăн тӳрех коллектива çырăннă. 10 çулта тăван ташăюрăшăн тунсăхланă ахăртнех. Вĕсем мăшăрĕпе киленче сурăх чылай усраççĕ. Ăратлăскерсем хуçисене çулсерен йĕкĕреш путек парнелесе савăнтараççĕ.

**Алина ИЗМАН.**

***Ыраш улăмĕпе тăранса пурăнакан лаша ыраш улăмĕ турттарма кăна юрăхлă.***

**Каларăш.**




**Тăванăм, вулаканăм!**

**Аса илтеретпĕр – “Чăваш хĕрарăмне” утă /июль/ уйăхĕн 1-мĕшĕнчен илсе тăмашкăн çырăнтарас тапхăр вĕçленсе пырать. Шутлă кунсем юлчĕç. Почтальонпа тĕл пулма ан манăр. Хаçатăн çитес çур çуллăхри çырăнтару хакĕ: 340,44 тенкĕ.**

**«Чăваш хĕрарăмне» редакцие килсе илмелле те çырăнма пулать. Хакĕ: 141 тенкĕ.**

ВĂТ, МАТТУР!

# Алă усса ларма хăнăхман

**Шупашкарти Богдан Хмельницкий урамĕнчи 127-мĕш çуртра пурăнакансенчен редакцие темиçе хутчен те çыру килчĕ. Вĕсем подьезда тирпейлекен Нюрăпа питĕ кăмăллă пулни пирки пĕлтереççĕ, ун çинчен хаçатра çырса кăларма ыйтаççĕ.**

Нюра аппана шыраса палăртнă адреспа ятарласа кайса килтĕмĕр.

Вăл тирпейлесе тăракан пилĕк хутлă çурта хăпарса куртăмăр. Чăннипех те таса та тирпейлĕ. Сахал йышлă семьесем валли купаланă çуртра пĕтĕмпе 68 хваттер. Çавăнпа ĕçĕ кунта пайтах. Картишĕнче те, çурт йĕри-тавра та типтерлĕччĕ.

Подьезд алăкĕ патĕнче улăм пĕрчинчен ăсталанă шлепкеллĕ хĕрт-сурт çакăнса тăрать. Коридорсенче нумай пулмасть çеç çуса кайнăран уçă, тусан шăрши те çук. Таса çуртра пурăнас килсе тăрать пуль çав, хăна чĕнме те намăс мар капла.

Шел те, кун-каçа таçта та çитекен, темиçе çĕрте ĕçлекен Нюра аппана ун чухне тĕл пулаймарăмăр. Кайран вăхăт тупса хăй килчĕ пирĕн пата. Нюра Талызина тирпейлӳçĕре ултă çул ĕçлет. «Ман кун иртен пуçласа каçчен çак тăкăрлăкра иртет. Пĕр çĕрти ĕçе вĕçлесен тепĕр çурта куçатăп. Ирхи 4 сехет çурăра килтен тухатăп та каçхине кăна çитетĕп», – каласа кăтартать Нюра аппа. Çавăнпах ĕнтĕ ăна кил хуçи шӳтлесе краватьне те хăйĕнпе пĕрлех илсе кайма ыйтать.

Хулана Муркаш районĕнчи Иштерек ялĕнчен куçса килнĕ тĕлĕнмелле çак хĕрарăм. Пĕрисем пенсие тухсан лăпкă пурăнас ĕмĕтпе ялалла туртăнаççĕ, вăл вара укçа ĕçлесе илес тĕллевпе хулара тĕпленме шухăшланă. 60 çулти хĕрарăм Шупашкарта ĕçе вырнаçнă: канăççăрскер ачисене пулăшасшăн. Тĕп килĕнче ывăлне хăварса, кредитпа усă курса хулара пӳлĕм туяннă. Анчах халĕ унта мăнукĕсем, студентсем, пурăнаççĕ. Ӳркенмен канăççăр хĕрарăм халĕ вара хваттер тара илнĕ.

Çамрăк чухне бригадирта, сутуçăра, ĕне сăваканра чылай çул тăрăшнă вăл. Ывăлĕпе хĕрĕ çемье çавăрнă хыççăн тăван ялтах пурăнаççĕ. «Сывлăх пур чухне килте алă усса ларас килмест. Ачамсемпе мăнуксене пăртак пулăшас килет. Яла кирек хăш вăхăтра та таврăнма пултаратăп», – тет Нюра аппа.

Вун пĕр çултанах колхозра ĕçленĕ май темле йывăр ĕçе те хăнăхнă вăл. Хĕлле юр хырассинчен, пăр катассинчен те хăрамасть. Ырă та уçă кăмăллă пулнине кура çӳлерех асăннă çуртрисем тепĕр чухне пулăшаççĕ ăна.

– Кунта ĕçлеме килсенех питĕ тирпейсĕрччĕ. Халь пачах тепĕр майлă ӳкерчĕк. Кашниех хитре те таса пурăнма тăрăшать. Ман ĕçе хисепленишĕн савăнатăп, – каласа кăтартать тирпейлӳçĕ.

Пушă вăхăтра «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçата тытать вăл. Кĕнеке вулать. Унсăр пуçне ӳсен-тăран тĕнчипе кăсăкланать. Мĕн пур йывăçран ытларах хурăна кăмăллать Нюра аппа. Çулçинчен пиçĕхтернĕ чей сиплĕхлĕ пулни, вăй пани, пурнăçа вăрăмлатни килĕшет ăна. Шăпăр, милĕк валли йывăça нихăçан та ятарласа авмасть, айккинчи туратсене çеç касать.

**Елена ГЛУХОВА.**
Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

**«Хыпар», «Çамрăксен хаçачĕ»: электрон çырăнтару**
*2014 çулăн II çурри валли*
**«Хыпара», «Çамрăксен хаçатне»**
*электрон мелпе çырăнса илме пулать.*
*Çур çуллăх хак:*
**«Хыпар» – 90 тенкĕ,**
**«Çамрăксен хаçачĕ» – 50 тенкĕ.**
Тĕплĕнрех – www.hypar.ru сайтра

ПАЛЛАШĂР: ПИРĔН АВТОР

# Йывăççисем вăрман пулса кашлаççĕ

**Пӳрт умĕнчи палансем шап-шур чечекреччĕ. Кил хуçи лартнă вĕсене. Кĕркунне çырли куçа йăмăхтарса аякранах илĕртнĕрен ытараймасть вĕсене арçын. Урам енчи пĕчĕк пахчара темĕн тĕрлĕ чечек шăтса тухнă.**

Мăшăрĕ чирлесе пурнăçран уйрăлнă хыççăн Шуркассинче тĕпленнĕ Николай Агаков пĕчченех пурăнать. Малтанхи кунсенче çăмăл пулман паллах. Хуйха-суйха, тунсăха ĕçре кăна сирме тăрăшнă. Пахча ĕçне ĕлĕкренех юратнă-ха вăл. Юлашки çулсенче унта чăн-чăн киленӳ тупнă. Çимĕç пахчинче кĕç-вĕç хăяр пулса çитет. Ăна кашни çулах ир акать вăл. Арпус сутăн илмест Николай Михайлович. Ăна та хăех çитĕнтерет. Садра темĕн тĕрлĕ улмуççи, груша, чие-слива, хурлăханпа хăмла çырли ӳсет. «Иçĕм çырли халь такамăн та пур, эпĕ паян кун та лартма ĕлкĕреймен. Кĕркунне туянасшăн-ха», – тет сад хуçи.

Тирпей-илеме, хăтлăха малти вырăна хуракан арçын чечексем те лартать. Купăста, помидор, пăрăç калчисене хăех ӳстерет. Ашшĕне хĕрĕсем те пулăшаççĕ ку ĕçре.

Сурăхсемпе чăх-чĕпсĕр пуçне кроликсем усрать. Вăрăм хăлхаллисене питĕ юратать кил хуçи. Витесене пысăклатса вĕсен йышне малашне тата ӳстерме ĕмĕтленет.

Платник ĕçне ăста Николай Михайлович. Пĕчĕк чухнех йывăçран тĕрлĕ хатĕр-хĕтĕр каскаласа кăларнă. Шăнкăрч вĕллисем ăсталама юратнă. Ял халăхне вăхăтĕнче кантăк рами, вĕллесемпе алăксем, çуна тавраш нумай хатĕрлесе панă. Алли çыпăçуллă пулнине таврара та пĕлеççĕ. Халĕ те пулăшу ыйтма пыракан пур.

– Тепĕр хĕрарăмран та тирпейлĕрех. Сывă пурнăç йĕркине пăхăнса пурăнать. Ун пек арçын сахал халь, – терĕç ял тăрăхĕнче. Николай Агаков чылай çул юхан шыв



портĕнче мотористра, кайран ГЭСра ĕçленĕ. Хумсен шавĕ, Атăл çийĕн чарлансем вĕçни халĕ те куçĕ умĕнчен каймасть-мĕн.

Пушă вăхăт тупăнсан сăвă хыççăн сăвă шăрçалать Николай Михайлович. Ача чухнех çырма тытăннă вăл. 16 çулта чухне унăн сăввине «Пионер сассинче» пичетленĕ хыççăн тата хавхаланса кайнă. Хайлавĕсене пухса 4 кĕнеке кăларнă. Сăввисем республикăри хаçат-журналта кун çути кураççĕ.

– Хам ĕмĕрте çурт лартнă, ывăл-хĕр ӳстернĕ. Йывăççисем вăрман пулсах кашлаççĕ, – терĕ юлашкинчен Николай Агаков.

**Елена АТАМАНОВА.**
Канаш районĕ.
Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

ТĂВАН ЧĔЛХЕ

# Шанăçпи урокĕсем

«Алла диплом илнĕ чухне эпĕ анне чĕлхине вĕрентесси мĕн тери яваплине, тен, ăнкарсах та çитереймен пулĕ. Çулсем иртнĕçемĕн тăван чĕлхе тĕшшине ачасен чунне хывма тăрăшни турă панă ĕç пулнине ăнлантăм», – çирĕплетет Муркаш районĕнчи Юнкă вăтам шкул педагогĕ Надежда Шандимирова. Унăн вĕренекенĕсем республика, район шайĕнчи олимпиадăсенче, конкурссенче, ăслăлăх конференцийĕсенче малти вырăнсем йышăнаççĕ. Чи пултаруллисен йышĕнче – Кристина Ветлугина, Ольга Хлебкова, Марина Хошкина, Александр Тойгильдин, Лейла Игнатьева, Инесса Михайлова, Инесса Шандимирова, Екатерина Федорова... Ачасен çитĕнĕвĕ ăна пурнăç çулĕпе çирĕппĕн утма хавхалантарать.

«Вĕрентӳ методикине çĕнетес тĕлĕшпе темиçе çул ĕçлетĕп. Уроксене хăйне евĕрлĕ ирттерни те шкул ачисен пĕлӳ никĕсне çирĕплетме пулăшать. Вĕренекенсем хăйсене хăтлă туйччăр тесе тăрăшатăп. Мĕн пытармалли – манăн йăл кулă та вĕсен кăмăлне уçать», – палăртать хĕрарăм. Ахальтен мар Надежда Вячеславовнăн Хисеп хучĕпе Диплом, Тав çырăвĕ нумай. Шкул тата ял библиотекисене хăтлăх кĕртнĕшĕн, кĕнекесемпе, хаçат-журналпа пуянлатнăшăн та ырă ята тивĕçнĕ вăл. Педагог гуманитари институчĕпе, Чăваш наци конгресĕпе тачă çыхăну тытать. Вĕсем те хĕрарăмăн хастарлăхĕпе пултарулăхне палăртмасăр хăварман.

Унăн ĕç пӳлĕмĕ те ыттисенчен уйрăлса тăрать. Кунта чăвашлăх тĕнчи уçăлать тейĕн. Кашни сăн ӳкерчĕке, япалана тĕллевлĕ вырнаçтарни куç кĕрет. Ал ăсти чӳрече карри таранах хăй тĕрленĕ. Ахальтен мар «Ял шкулĕсенчи чăваш чĕлхипе литература чи хăтлă пӳлĕмĕ» республика конкурсĕнче çĕнтернĕ вăл.

Надежда Вячеславовна сăвă çырма та, юрлама-ташлама та, тăван тăрăха тĕпчеме те вăйхал çитерет, вăхăт тупать. Сăмах май, Шан Шанăçпи хушма ятпа сăвăсен кĕнеки пичетлесе кăларнă вăл.

«Чăвашсем мĕн авалтан ачипăчине ĕçе хăнăхтарса тата илеме курмашкăн, ăшă кăмăллă пулмашкăн, çын хушшинче хăйне килĕшӳллĕ тытмашкăн вĕрентсе çитĕнтернĕ. Ăна ăс-тăнне аталантарма, кĕлеткине пиçĕхтерме майсем туса панă.

Ачасене пăхса ӳстересси çинчен калакан ăслăлăх – çĕр çинчи чи авалхи наукăсенчен пĕри. Вăл сĕм авалтанах аталанман тăк пĕр халăх та сыхланса юлман пулĕччĕ. Халăх педагогики – унăн çăлăнăçĕ, малашлăхĕ. Çамрăк ăрăва тăван халăхăн йăли-йĕркине, культурине, чĕлхине упрама вĕрентесси сăваплă ĕç тесе шухăшлатăп», – пĕтĕмлетет Надежда Шандимирова.

**Мария РОМАНСКАЯ.**
Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

САМАХ ПАРĂР-ХА

# Кивçен пурнăç

Елена АТАМАНОВА

«Укçа кирлĕ-и?» текен СМС йăлăхтарсах çитерчĕ. Вăйпах нухрат сĕнеççĕ. Палăртнă телефон номерĕпе шăнкăравламалла çеç – укçаллă пулатăн та. Чарăнусенче, реклама щичĕсем çинче те «Укçа – поручительсемсĕр, справкăсемсĕр» тесе çырнине асăрханах ĕнтĕ. Кредит карттисене урамра та вăйпах сĕнеççĕ, ĕçе килсе те сăпса пекех çыпăçаççĕ. Серепене çакланнине сиссе те юлаймăн çав...

Кĕсье тулли кредит илсе тултарнă çын хăйне малтанлăха укçаллă, çавна май – телейлĕ туять. Пĕринпе, тепринпе усă курать, кирлĕ-кирлĕ маршăнах тăкакланать, перекетлемелли пирки шухăшламасть те. Процентсем те манăçаççĕ ахăртнех...

Пĕлĕшĕмĕн хĕрĕпе шăпах çапла пулса тухнă та. Кредит авăрне кĕрсе ўкнине, унтан вара ниепле те тухма çуккине халь тин ăнланса илнĕ. Хăй те сиссе юлайман – парăмĕ 800 пин тенке çитнĕ. Малтан пĕр картта çеç илнĕ-ха вăл. Ăна вăхăтра тўлейменнипе проценчĕсем ўссе кайнă. Маларах илнĕ карттăна хупас тесе çĕннине уçтарнă. Ним тума аптранипе татах, татах илнĕ. Çак хушăра никампа та чуна уçса калаçман, йăлтах вăрттăнлăхра тытнă. Сереперен тухма çуккине ăнланса илсен çеç амăшĕ патне йĕрсе килнĕ. Анчах та кая юлнă.

Сутуçăра ĕçлекенскерĕн шалăвĕ пысăк мар. Хут уйăрттармасăр пурăнакан мăшăрне, килтен хăваласа кăларса ярасран шикленнипе, калама та хăрать. Финанс чуралăхне çакланнă çын эрне хушшинче йăлт хуралса ларчĕ. Хĕрне пулăшас тесе чирлĕ амăшĕ ирĕн-каçăн ĕçлет халь. Пĕр çĕртен тухать те тепĕр çĕре чупать. Тăванĕсенчен те кивçен илнĕ. Перекет банкĕнчен 150 пин кредит илсе Тинькоффăн пĕр карттине хупрĕ. Вĕсен кунта офис та, банкомат та çук. Кредита тўлесе татни пирки тата нимле хут та памаççĕ. Тўлевсем татах та килме пултарасси те хăратать.

– Уйăхсерен малтан 47 пин тенкĕ тўлемеллеччĕ, халь пĕр карттăна хуптарнă хыççăн 29 пин тенкĕ кăларса пама тивет. Унсăр пуçне ытти тўлев те пур. Пухăннă проценчĕ вара уйăхсерен пĕтĕмпе те 4 тенкĕ кăна татăлать. Ку парăмран ĕмĕрне те, хамăр вилмесĕр те, хăтăлассăн туйăнмасть. Çĕрĕн-кунĕн ĕçлетпĕр, хамăр выçă пурăнатпăр, банксене тăрантаратпăр, – тет йĕре-йĕре амăшĕ.

Мĕн тери пысăк йăнăш тунине хĕрĕ ытла та кая юлса ăнланнă çав. Хăй ирĕкĕпе чура пулса тăнă. Пĕтĕмпех айванлăха пула. Килĕшўпе маларах лайăх паллашман. Укçине тўрех тăкаклама тытăннă. 30 çултан каçнăскерĕн пăртак ăс пулмалла мар-и вара? Киле валли те нимех те туянман. Пурнăçне лайăх енне улăштарас тесе тăрăшни те курăнмасть. Мĕнех, пăртак ирĕклĕрех çеç пурăннă. Тутлă çинĕ, пăртак тумтир таврашĕ илкеленĕ темелле-ши? Чавса çывăх та – çыртма çук çав. «Кивçен илнĕ çур патманшăн çур çул тар тăкас пулать», – тесе ахальтен каламан пуль çав чăвашсем.

Çав вăхăтрах çын хуйхи çинче укçа тăвакан та пур. Аптраса çитнипе пĕлĕшĕм Шупашкарта вырнаçнă «Кредит пусмăрĕнчен – финанс хўтĕлевĕ» патшалăхăн мар организацие консультацие кайнă. Унта банксемпе коллекторсенчен хўтĕлеççĕ, кредит ыйтăвне татса пама пулăшаççĕ имĕш. Анчах та вĕсене уйăхсерен каллех 7 пин тенкĕ ытла тўлесе тăмалла. Банксене суда парса парăма пĕчĕклеттерме пулăшаççĕ çапла майпа. Анчах та çак ĕç-пуç часах вĕçленес çук. Çулталăк ытла та тăсăлма пултарать-мĕн. Палăртнă хака вара вĕсене тўлемеллех, унсăрăн пулăшма пăрахаççĕ.

Марк Твенăн 100 çул каяллахи каларăшĕ асран тухмасть. «Банкир – урамра хĕвел хĕртсе пăхнă чухне сунчăк паракан çын. Çумăр çума тытăнсанах ăна тавăрса пама ыйтать», – тенĕ писатель.

Паллах, кивçене процентпа-и, процентсăр-и вăл – тўлемеллех – никам та ку пурнăçра ахалех укçа парса ларас çук.

Карттăпа пĕлсе усă куракансем те пур. Укçана вăхăтра хураççĕ те – нимĕнле ыйту та çук. 50 е 55 кунлăха кивçене процентсăрах параççĕ. Вăхăтра тўлемелле çеç. Çак хушăра укçана каялла тавăрса параймасан вара процентсем кăмпа пекех ўсме тытăнаççĕ. Вăл вара калама çук пысăк, çулталăка 45, 55, 65 процент таранах.

Ваттисем «Кивçен илнине сăмса çине картса хур» тесе каланине самантлăха та асран кăлармалла мар çав. Кивçен илме кăна мар, ăна тавăрса пама та ăс кирлĕ иккен.

СПОРТ

# Шупашкар районĕ – çĕнтерўçĕ

Иртнĕ эрнере Кўкеçре XVII Республикăри ялăн çуллахи спорт вăййисем иртрĕç. Икĕ куна пынă тупăшура пĕтĕмĕшле команда зачетĕнче Шупашкар районĕ çĕнтернĕ, иккĕмĕш вырăнта – Патăрьелсем, виççĕмĕшĕнче – Вăрнарсем.

Ăмăртăва пурĕ 600-е яхăн çын хутшăннă, медальсемпе Кубоксене спортăн 13 тĕсĕнче выляттарнă. Çĕнтерўçĕ XXX Пĕтĕм Раççейри ял вăййисен финалне каймашкăн тивĕçĕ.

# Ентешсем – çĕр-шыв чемпионĕсем

● ВЕРА СОКОЛОВА.

Шупашкарта иртнĕ хăвăрт утас енĕпе Раççей чемпионачĕ тата первенстви пирĕн ентешсемшĕн лайăх кăтартупа вĕçленчĕ. Командăсен хушшинче малти вырăнсене Мордвапа Чăваш республикисен тата Мускав атлечĕсем йышăнчĕç.

Хĕрарăмсен дистанцийĕнче ентешсем – Вера Соколовăпа Светлана Васильева – мала тухрĕç. Муркаш район пики, тĕнче класлă спорт мастерĕ, 27 çулти Вера Соколова Европа чемпионатне хутшăнма путевка çĕнсе илчĕ.

Арçынсен 20 километрлă дистанцийĕнче пирĕн Петр Трофимов кĕмĕле тивĕçрĕ, финиша унран малтан Мордва спортсменĕ Денис Стрелков тухрĕ.

5000 тата 10000 метра спорт мелĕпе утса тухасси енĕпе те /16-18 çулсенчи хĕрсемпе каччăсен хушшинче/ савăнтаракансем тупăнчĕç: Мария Лосиновăпа Клавдия Афанасьева иккĕмĕш вырăнсене çĕнсе илчĕç, Константин Семенов – виççĕмĕш.

50 километрлă дистанцие парăнтарассипе тупăшу уйрăмах хĕрў иртнĕ. Çăмăл мар тĕрĕслев тăватă сехет ытла пынă. Пирĕн марафонça Александр Яргунькина /вăл та Соколовăпа Трофимов пекех – Муркаш районĕнчен/ çитекенни пулман. Çапла майпа вăл Раççей пĕрлештернĕ командин йышĕнче çăмăл атлетика енĕпе Европа чемпионатне хутшăнĕ.

Алина ИЗМАН.

● АЛЕКСАНДР ЯРГУНЬКИН.

РЕСПУБЛИКА КУНЕ

# Тавралăх çĕнелсе илемленет

Шупашкарта кăна мар, Каçал тăрăхĕнче те Республика кунне пĕрле уявламашкăн килекен хăнасене кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Комсомольски районĕнче тўрех 5 объект хута яма палăртнă. Çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕ тĕлне плана кĕртнĕ фельдшерпа акушер 3 пунктĕнчен пĕри ĕçлеме пуçлĕ. Тăлăх ачасем тата кивĕ çуртсенче пурăнакансем валли 3 хутлă çурт хатĕрпе пĕрех. Унсăр пуçне фермăпа суту-илў 2 центрĕ туса пĕтересшĕн. Унта çавнашкалах çул-йĕрпе троутарсене юсаса çĕнетеççĕ, предприятипе организаци çурчĕсене сăрласа илемлетеççĕ, чечек лартаççĕ. Уяв программине те çирĕплетнĕ ĕнтĕ. Каçалсем уяв хăнисен кăмăлне тупасса шанаççĕ.

Марина ГРИГОРЬЕВА.

ФЕСТИВАЛЬ

# Ватă хулапа паллаштарнă

Чăваш наци музейĕн пуçлăхĕ Ирина Меньшикова Мускаври «Манеж» курав залĕнче иртнĕ халăхсен хушшинчи «Интермузей – 2014» фестивале хутшăннă. Ăна 1999 çултанпа йĕркелеççĕ. Ку фестиваль музей профессионал пĕрлĕхĕшĕн кăна мар, ытти çыншăн та кăсăклă.

«Çакнашкал мероприяти музей технологийĕсен хăвачĕ çинчен калаçма май парать, çĕнĕлĕхсемпе паллаштарать», – тенĕ çĕр-шывăн премьер-министрĕ Дмитрий Медведев фестивале уçнă май.

Чăваш наци музейĕ курав тĕп экспозицийĕсен стендне хатĕрленĕ, çакăнтах филиалсен ĕçĕхĕлĕпе паллаштарнă. Фестиваль хăнисен «Шупашкар: 3D форматри истори» фильм курса ватă хула урамĕсемпе уçăлса çўремешкĕн май килнĕ.

Мария РОМАНСКАЯ.

ЭПИР ÇЫРНĂ ЧЧĔ

# Ырă ят ылтăнран çутă

Иртнĕ номерте Çеçпĕл Мишшин амăшĕн вил тăприне чылай çул тирпейлесе тăнă Зоя Михайловăна аса илнĕ чĕ. Сăпайлă хĕрарăм çакна капашсăр пысăк ĕç вырăнне хумасть. Çапах та хаçат вулаканĕсене Зоя Васильевнăпа сывăхрах паллаштарас килет.

84-ран иртнĕ вăл. Шупашкарта пурăнать. Пĕлтĕрччен дачăра ĕçлеме вăй çитернĕ. Халĕ çуртпа çĕр лаптăкне сутнă ĕнтĕ. Çĕнĕ хуçасем валли ыхра, улма-çырла хунавĕсем лартса хăварнă. «Хамăр çитĕнтернĕ çĕр улми пĕтменха», – хăпартланать хресчен ĕçне юратакан чăваш хĕрарăмĕ. Çапла, тарпа йĕпеннĕ çĕр çинчен пуçтарса кĕртнĕ çимĕç тем тесен те тутлăрах.

Зоя Михайлова Шупашкар районĕнчи Ишлей тăрăхĕнче çуралнă. Çамрăклах кирпĕч заводĕнче вакун тĕкнĕ. «Çавăн чухне йывăр ĕçе кӳлĕннĕренех кукăрăлтăм-ши?» – кăмăлĕ пусăрăнать унăн. Унтан суту-илӳ ĕçне вĕреннĕ. Иосиф Сталин вилсен ытти студентпа пĕрле хура хăю сутма кăларнă ăна. Алла диплом илсен сутуçа вырнаçнă. Кайран 30 çул электроаппарат заводĕнче вăй хунă. Унăн мăшăрĕ те çакăнтах 45 çул тăрăшнă. Çут тĕнчерен уйрăлнă упăшкине ырăпа çеç аса илет кил вучахне упракан.

«Эпĕ телевизорпа илемлĕ фильмсем пăхмастăп, хыпар кăларăмĕсене çеç сиктермесĕр куратăп», – калаçăва тăсать Зоя Васильевна. Юлашки вăхăтра Украинăри ларутăрупа кăсăклансах тăрать вăл.

Зоя Михайлова – икĕ ача амăшĕ. Асли Александр – çемьеллĕ. Хĕрарăма куç тулли мăнукĕсем хавхалантарса тăраççĕ. Кĕçĕннин Виталин ĕмĕрĕ кĕске пулнă. Шкула кайма пуçтарăнаканскер пуçри шыççа пула вилсе кайнă. «Ун чухне раштавра та аслати авăтрĕ теççĕ», – амăшĕн чун суранĕ нихăçан та пирчеммĕ. Унпăн тĕпренчĕкĕ яланлăхах 9 çулта.

«Ăна пытарсан 1-2 çултан тĕлĕк тĕлленчĕ. Виталий çуркуннене çав тери юрататчĕ. Аслă çул айккипе тĕрлĕ тĕмпе йывăç çеçкене ларнă пек. Таçтан аякран ватă çынпа ача утса килеççĕ. Ман пата çитрĕç те – çав тĕпренчĕк Витали пулчĕ-тăчĕ. Ывăлăм ман енне пăхса кулса та кăтартрĕ. Çав хĕрарăм ăна хăйĕнпе пĕрле илсе кайрĕ», – чунне уçать Зоя Васильевна. Çеçпĕл Мишшин амăшĕ Агафия Николаевна пулнă, ахăр, вăл. Шăпах çак тĕлĕк хыççăн унăн вил тăприне 40 çул ытла пăхса тăнă ырă кăмăллă чăваш хĕрарăмĕ.

Мухтавлă ывăл çуратнă хĕрарăм çинчен Зоя Михайловăна типографире ĕçленĕ Александра Туйская каласа кăтартнă. Аслин хĕресна амăшĕ республикăри ларутăрăва лайăх пĕлсе тăни куç кĕрет.

Çеçпĕл Мишшин черетлĕ юбилейне паллă тунă вăхăтра пулăшу ыйтса радиона та çитнĕ, Агафия Николаевăн палăкне тӳрлетсе лартма çын шыранă. Анчах журналистсен ăна итлеме вăхăт тупăнман. «Ăнлантарма пĕлеймерĕм-и тен?» – пур пĕрех никама та айăпламасть Зоя Васильевна.

Кăçал та Шупашкарти 2-мĕш масар çинче канлĕх тупнă ывăлĕ патне çитсе килнĕ хĕрарăм. Çеçпĕл Мишшин амăшĕн вил тăприйĕ патне халăх çӳреме пуçланишĕн çав тери кăмăллă вăл.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

ТĔСЛĔХ ШАЙĔНЧЕ

# Алран алла куçать кĕнеке

Çĕрпӳ районĕнчи Апакасси ял администрацийĕн чи пысăк та çутă кĕтесне вулавăш валли уйăрнă. Кунта чăвашла вулама юратни куç кĕрет. Ывăлĕпе, кинĕпе пурăнакан 82 çулти Геннадий Архипов вулавăша час-часах çул тытать. Анатольевсем, Даниловсем, Зинаида Максимова, Вениамин Трофимов, Анастасия Федорова кĕнекепе уйрăмах туслă.

– Юрату, вăрçă çинчен вулама килĕштереççĕ. Улька Эльмен, Ангелина Павловская, Сарине, Ордем Гали хайлавĕсене пĕрмаях ыйтаççĕ, – каласа кăтартать Алевтина Дмитриевна библиотекарь.

Кĕнеке туянма ял тăрăхĕ çулсерен вунă-çирĕм пин тенкĕ таранах укçа-тенкĕ уйăрать. Кăçал 20 пин тенкĕлĕх туяннă. Унсăр пуçне çĕнĕ ноутбук, фотокамера илнĕ. Тĕрлĕ литературăпа, энциклопедипе, çĕнĕ йышши журналсемпе пуян вулавăш. Чăвашла тухакан мĕн пур хаçат-журнал килсе тăрать кунта.

– Çулла, паллах, ял çыннин вулама вăхăт çук. Çапах та хуларан яла куçса килнĕ пенсионерсем, черетпе кĕтӳ кĕтекенсем тата шкул ачисем халĕ те çӳреççĕ. Кĕркунне пахчари ĕç вĕçленсен, çумăрсем пуçлансан халăх пирĕн пата пушшех çул такăрлатма тытăнать. Ун чухне çĕнĕ кĕнекесем тупса пама çеç ĕлкĕр, – тет Алевтина Иванова.

Вулавăш фондне çулсерен пуянлатасси йăлана кĕнĕ ку тăрăхра. Пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа çу уйăхĕн 30-мĕшĕччен "Алран алла куçакан кĕнеке: пире тата ачасемпе мăнуксем валли" ятпа ыр кăмăллăх акцийĕ иртнĕ. Апакассинчи тата Виçикассинчи библиотекăсен фондне вырăнти çынсем 180 экземпляр кĕнекепе пуянлатнă. Парнеленĕ литература хушшинче ытларах вырăс тата ют çĕршыв авторĕсем. Даниэл Стил, Маргарет Митчелл, Анн тата Серж Голон бестселлерĕсем, Юлия Шилова кĕнекисем, çавăн пекех "Зарубежный детектив", "Шарм", "Осирис", "Мир отражений" серисем çӳлĕксем çинче вырăн тупнă.

**Елена ГЛУХОВА.**

ÇĔНĔЛĔХ

# Çӳп-çап куписене спутник шырать

Раççей сучĕсенче пĕр кунра кăна çĕр надзорĕпе çыхăннă 30 ытла ĕçе пăхса тухаççĕ. Çакă сахал теме чĕлхе çаврăнмасть. Ытларах та пулĕччĕ, анчах ĕçе суда çитериччен вăл е ку лаптăк тĕлĕшпе тулли информаци пухмалла: документсене кăна мар, çĕр пахалăхне палăртма лаборатори тĕпчевĕсем ирттермелле. Хăш-пĕр чухне хуçине пĕлес тесе тивĕçлĕ органсене çырупа тухса хурав иличчене вăхăт самай иртет. Лаборатори тĕпчевĕ те хăвăрт пулакан ĕç мар.

Чăнах та ĕнтĕ, çĕрпе çыхăннă ыйтусен çивĕчлĕхĕ чакмасть. Хальхи вăхăтра Раççейре ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ 20 миллион ытла гектар ахаль выртать. Тахçан унта тыр-пул, пахча çимĕç акса-лартса туса илнĕ, паян вара вĕсем патне "алă çитмест" е вĕсемпе урăх тĕллевпе усă кураççĕ. Специалистсем каланă тăрăх, çулсерен ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсен калăпăшĕ 3,2 млн гектар пĕчĕкленет.

Раççей ял хуçалăх надзорĕн ĕçченĕсем палăртнă тăрăх, паян "усă курман çĕрсем" ăнлавпа темиçе çул çум курăк тата тĕм-йывăç айĕнче выртакан лаптăксем тĕлĕшпе усă кураççĕ. Кунашкал çĕрсем çинче нимĕн те туса илмеççĕ. Йăлари хытă каяшсем пăрахса тултарнă лаптăксем пирки те çаплах калаççĕ. Çак сăлтава пулах вĕсене пусă çаврăнăшĕнчен кăлараççĕ те.

Çӳп-çап куписенчен ытла вĕсен айĕнчи пулăхлă тăпрана япăх витĕм кӳни хăрушлăх кăларса тăратать. Лаборатори тĕпчевĕсем çĕрсем йывăр металсен тăварĕсемпе сиенленнине çирĕплетеççĕ. Санкцилемен çакнашкал вырăнсем çунсан тăпрара хими сиенлĕ япали пухăнма тытăнать. Вăл çыншăн хăрушă шутланать. Кунсăр пуçне, паллă ĕнтĕ, ун пек вырăнсенче пыршăлăхшăн япăх бактерисем ĕрчеççĕ.

2013 çулта асăннă ведомство инспекторĕсем 2,1 пин çӳп-çап купи тупса палăртнă. Вĕсем муниципалитет пĕрлешĕвĕсем çителĕксĕр ĕçленине пула çуралнă. Пĕтĕмпе вара кирлĕ мар япала пăрахнă 3,8 пин вырăн куç тĕлне пулнă. Кунашкал йĕркесĕрлĕхшĕн 26,0 млн тенкĕлĕх штрафланă.

Чăваш Енре вара инспекторсем 25 ял тăрăхĕнче пулнă май 25 çӳп-çап купи асăрханă, пĕтĕмпе – 37.

Çĕре пусă çаврăнăшĕнчен кăларакан сăлтавсенчен хăтăлса пĕтĕпĕр-и? Ытларах чухне çӳп-çап куписем пирки çынсем пĕлтереççĕ. Юлашки вăхăтра çĕре упрас ĕçре çĕнĕлĕхсем пур. Сăмахран, санкцилемен çӳп-çап куписене спутник урлă тупса палăртакан программăпа кăсăкланма пуçланине палăртаççĕ. Ăна Кубань патшалăх университетĕнче шутласа кăларнă. Унпа нумаях пулмасть усă курма пуçланă пулин те кăтартăвĕсем куç умĕнче - 10 пин купа тупнă та. Вĕсене пĕтериччен çĕннисене "ӳссе ларма" парас марччĕ.

**Надежда ВАСИЛЬЕВА, управлени ĕçченĕ.**

ХЎТЛĔХ

# Икĕ ача амăшĕ... çемçе теттепе çывăрать

Темле йывăр лару-тăрура пурăнакан та пур. Çемьере хирĕçӳ чылай чухне ĕçкĕпе иртĕхнине пула тухать. Арçын кашни кун ӳсĕр килсе мăшăрĕпе ачи-пăчине канăç памасть. Теприсем никама каламасăр çакна ĕмĕрĕпех е пĕрпĕр инкек пуличчен чăтса пурăнаççĕ. Ĕçкĕçсен çемйинче пуринчен ытларах ачисене шел. Пĕрмай хирĕçни, çапăçни пĕчĕкскерсен чунне, ăс-тăнне амантать. Ĕçке ярăннă çынпа вĕçнехĕрне тухма çук. Çитменнине, унран çак самантра темĕн те кĕтсе илме пулать. Çавăнпа та ку вăхăтра килтен тухса кайни лайăхрах та пуль. Анчах та ăçта каймалла? Тăвансене, тантăшсене чăрмантарас та, çемьери ларутăрăва çынна пĕлтерес те килмест. Çулла урамра та çӳрекелеме пулĕ. Хĕл кунĕсенче мĕн тумалла, ăçта каймалла? Чăтать, урăлсан каçарать упăшкине мăнтарăн хĕрарăмĕ. Хамăртан аякра мар пурăнакан кинеми хăйĕн нушаллă кун-çулне ялан куççульпе аса илетчĕ. Пуртă-çĕçĕпе кăна хăратса пурăннă ăна мăшăрĕ. Патак айĕнчен тухса курайман мĕскĕн.

– Ача çуратса килсен ӳсĕр упăшка урама хăваласа кăларса ячĕ. Чӳк уйăхĕ, самаях сивĕ. Урана кăçатă та тăхăнса ĕлкĕреймерĕм, юр çийĕн çарран темиçе сехет çӳрерĕм. Вĕрилентерчĕ çакăн хыççăн. Кăкăрсем шыçса ларчĕç. Тухтăрсем вилĕмрен аран хăтарса хăварчĕç, – тесе калани халĕ те асран тухмасть.

Йывăр лару-тăрăва лекнĕ хĕрарăмсене пулăшас тĕлĕшпе Шупашкарта ятарлă уйрăм уçнă. Вăл Хусанкай урамĕнчи 29А çуртра вырнаçнă. Телефон номерĕ: 53-42-94. Унта хуларисене кăна мар, районтисене те талăкĕпех йышăнаççĕ. Пĕтĕмпе 90 кун таран пурăнма пулать. Сывă пулнине ĕнентерекен справка кăна кирлĕ /ăна терапевтран илмелле/. Малтанхи кун асăннă уйрăма справкăсăр та йышăнаççĕ. Тепĕр кунне çак çурт çумне ятарласа çирĕплетнĕ терапевт сывлăха тĕрĕслетех.

Хĕрарăмсене пулăшу кӳрекен уйрăм 2009 çултанпах ĕçлет. Малтан кунта консультаци çеç панă, 2013 çулхи чӳк уйăхĕнчен пуçласа пурăнма та пулать. Пĕтĕмпе 6 çын валли вырăн йĕркеленĕ. «Шел те, йĕркеллĕ хĕрарăмсем сахал килеççĕ, пусмăрланине шăл çыртса чăтаççĕ, ытларах пурнăçра арпашăнса кайнисем, хăйсен тĕллевне çухатнисем лекеççĕ», – терĕç кунта тăрăшакансем.

Паян уйрăмра 4 хĕрарăм хӳтлĕх тупнă. Кашнин хăйĕн шăпи. Маша /хăй ыйтнипе ятне улăштарнă/ кунта тахçантанпах пурăнать. Вăл ĕçкĕçсен çемйинче ӳснĕ. Хĕр 16 çула çитсен çывăх çыннисем пурнăçран уйрăлса кайнă. Пĕччен юлсан каччăпа тĕл пулма тытăннă. Часах çие юлнă. Пулас ача ашшĕпе çыхăну татăлнă. Хĕр-тантăшĕсем патĕнче пурăнкаланă çак хушăра. Пепке çуралнă. Хĕрарăм кĕçех урăх арçынпа тĕл пулма тытăннă. Унпа та çемье çавăрайман. Ку каччăран иккĕмĕшне çуратнă. Арçынсем иккĕшĕ те ĕçекенскерсем çаклаттă. Хĕрарăм хăй те эрех-сăрана тиркесех тăман. Маша пĕрремĕш ачине çуратиччен тĕрмере ларнине пытармасть. Унта мĕншĕн лекнине уççăнах каласшăн мар. Кайран ĕçкĕпе иртĕхме тытăннăскер наркологи диспансерĕнче сипленнĕ. Виçĕ тата тăватă çулти ывăлĕпе хĕрĕ çак çуртрах вырнаçнă социаллă реабилитаци центрĕнче пурăнаççĕ. 26 çулти çамрăк хĕрарăм каллех çĕнĕ арçын тупнине пытармасть. Лешĕ апат-çимĕçпе пулăшкалать. Ниçта ĕçлемесĕр пурăннă Маша тинех кафене вырнаçнă. Тепĕр уйăхран унăн пурăнмалли вырăн шырама тивĕ. Ăçта каясси хальлĕхе паллă мар. «Хамăр каламасăр ачисене кайса курма васкамасть. Çуратасса çуратнă, анчах та амăшĕн туйăмĕ халĕ те вăранман. Машăна ăнланмалла мар. Хăй халĕ те ача темелле-ши? Каçхине çемçе теттепе çывăрать. Çемье пурнăçне пачах та хатĕр мар», – тет реабилитаци уйрăмĕн директор çумĕ Лариса Рябинина.

Хĕрарăмсене пулăшу паракан уйрăмра тӳлевсĕрех пурăнтараççĕ. Япала çума та, апат пĕçерме те майсем пур. Апат-çимĕçне вара хăйсен туянма тивет.

Кунта лекнисене тӳлевсĕр юридици тата психологи пулăшăвĕ параççĕ. Кашни хĕрарăм çумне пĕр социаллă ĕçчене çирĕплетнĕ. Пĕтĕмпех çынран килет. Çак 90 кун хушшинче пурнăçа лайăх енне улăштарма та май пур.

**Елена АТАМАНОВА.**

**Йывăр лару-тăрăва лекнĕ хĕрарăмсене йышăнакан уйрăм Шупашкарта, Хусанкай урамĕнчи 29 А çуртра вырнаçнă. Телефон номерĕ: 53-42-94.**

ÇУЛ ÇЎРЕВ

**Йĕпреç районĕ чăтлăх вăрмансемпе чапа тухнă. Ирçе Çармăс тăрăхĕнчен 5 çухрăмра, вăрман уçланкинче, Кĕтне юхан шывĕ хĕрринче, прихут вырнаçнă. Ĕлĕкрех кунта хĕрарăмсен мăнастирĕ пулнăран халăхра ăна халĕ те «мăнастир» тесех каласçĕ.**

# Кунта чун та ирĕлет...

## Мăнастир

Пуç çапма çĕрекенсем, вырăнти çынсем тăрăшнипе 1903 çулта хута кайнăскерте 60 хĕрарăм пурăннă. Мăнастирĕн 50 теçеттин çĕр, шыв арманĕ, вите таврашĕ, ампар, мунча, нӳхреп... пулнă. Темиçе пуç ĕне, лаша усранă, вĕлле хурчĕ тытнă. Валентина матăшкă тирпей-илем кĕртес тĕлĕшпе чылай вăй хунă. Ырă кăмăллă хĕрарăм турра ĕненекенсене, таркăн хресченсене, сусăрсене яланах пулăшнă. I Тĕнче вăрçине мăнастир ăшă япаласем, апат-çимĕç ăсатнă, тăлăхсемпе сусăрсене валли халăхран япаласем пуçтарнă.

Совет влаçĕн тапхăрĕнче мăнастир хупăннă, чылай манаха ирĕклĕхсĕр хăварнă. Хăшĕ-пĕри ку вырăна каясшăн пулманнипе çак таврашрах пытанса пурăннă теççĕ. Çын шăм-шакне тупнине шăпах çакăнпа çыхăнтараççĕ. 1921 çулта кунта III Интернационал ячĕллĕ ача çурчĕ уçăлнă. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче интерната Йĕпреçе куçарса кайнă. Мăнастир вырăнĕнче иртнĕ ĕмĕр вĕçĕчченех вăрман хуралĕн çурт-йĕрĕ çеç тăрса юлнă.

21-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче вырăнти çынсен пуçарăвĕпе мăнастире çĕнĕрен чĕртме тытăннă. Сăваплă Николай ячĕллĕ чиркĕве йывăçран хăпартнă, хĕрарăмсен, священник çуртне хута янă. Мĕн ĕлĕкреннех пуç çапнă вырăна нумаях пулмасть эпир те çитсе куртăмăр. Кунта йĕри-тавралла пăхса тăранмалла мар илемлĕ вырăн. Сывлăшĕ те сăваплă ахăртнех. Çавăнпах-тăр чун канса, ирĕлсех каять...

## Турăпа çывăхланмалли вырăн

Ирçе Çармăс ялĕнче пире Иона манах хăйĕн машинипе пырса илчĕ. Мăнастирте арçынсем те пурăнаççĕ. Паянхи кун вĕсем – виççĕн, унччен 10-15-ĕн те пулнă. Хуçалăхра вĕсен вăйĕпе пурнăçламалли ĕç пайтах. Арçынсем строительство ĕçĕсене хутшăнаççĕ. Иона манах каласа кăтартнă тăрăх – чиркӳ çĕклеме ятарласа кирпĕч хураксен бригадине илсе килнĕ, анчах ĕç ниепле те кайман çылăхлăскерсен. Сăваплă çурта тĕн саккунне пăхăнса пурăнакансем хăйсемех купаласа пĕтернĕ.

Манаха тухичченхи пурнăçа тĕне ĕненекенсем аса илмеççĕ, унпа вĕсем ĕмĕрлĕхех сыв пуллашаççĕ, çĕнĕ ятпа /ăна манаха кăларакан хăй тупса парать/ çӳреме тытăнаççĕ. Çапах та Иона манах Санкт-Петербургра çуралса ӳснине, унăн амăшĕ учительница пулнине пĕлтĕмĕр. Уй урлă каçсан вăрман пуçланать. Пĕлмен çын ку вырăнта çухалса та кайĕ. «Кама кирлĕ – тупатех. Хальхи çынсем экзотика, çĕнĕ кăмăл-туйăм шыраса таçта, вăл шутра – сăваплă вырăнсене те, çитме тăрăшаççĕ, чĕрĕ манаха курасшăн хăшĕпĕри. Анчах кунта турăпа çывăхланмалли, чунтан ӳкĕнсе каçару ыйтмалли сăваплă вырăн пулнине манас марччĕ», – палăртать Иона манах.

Кĕçех уçланкăна çитсе тухрăмăр. Пире прихут настоятельници Лидия матăшкă кĕтсе илчĕ. Кунта пачăшкă çукки пăшăрхантарать мăнастирте пурăнакансене. Çапах та кĕлле çакăнтах çӳреççĕ. Турă юнне сыпма Йĕпреçе каяççĕ.

## Хула шăв-шавĕнчен писнĕ

Хĕрарăмсем пурăнакан çурт – икĕ хутлă: пĕрремĕшĕнче – апатланмалли, иккĕмĕшĕнче уйрăм пӳлĕмсем. Хĕрарăм манахсем – улттăн. Вĕсенчен пĕри – чăваш, ыттисем Тутартстанран килнĕ. 40 çул каяллах хура тум тăхăннă чăваш хĕрарăмĕ çынран ютшăнать пулин те пирĕнпе кăштах сăмахласа илчĕ, анчах хăйĕн çинчен нимĕн те çырма хушмарĕ.

Канаш районĕнчен килнĕ Надежда Васильева кунта çулталăка яхăн пурăнать. Вăл манашкă мар, хăй ирĕкĕпе ĕçлесе мăнастире пулăшать. Пĕлтĕр ăна пĕлĕшĕ Валентина сăваплă çăл куçа шыва кĕме илсе килнĕ. Ун чухне кунта матăшкăсăр пуçне хĕрарăмсем пулман. «Строительсене апат пĕçерсе çитермешкĕн пĕр эрнелĕх юлса пăхам-ха терĕм те паянхи кун та пурăнатăп. Матăшкă çынна питĕ хĕрхенекенскер. Киле каяс килсен леçсе яма хушать, килес тесен пырсах илеççĕ», – каласа кăтартрĕ 72-ри Надежда Васильевна. Вăл Çĕнĕ Мами ялĕнче çуралса ӳснĕ, аппăшĕ хыççăн Мурманска тухса кайнă та 45 çул унта ĕçлесе пурăннă. Упăшки вилнĕ хыççăн хĕрарăм тăван тăрăха таврăнма тĕв тунă. Канашра хваттер туяннă. Ăна вăл ятарласа чиркӳ çумĕнчине суйланă. Надежда Васильевна унта пĕр вăхăт псалтирь вулама çӳренĕ. Килте тăватă стена хушшинче кичемленсе ларса ури те утаймиех пулнă-мĕн.

Мăнастирте ĕççĕр пĕр кун та иртмест, çапах та чăваш хĕрарăмĕ хăйне валли канлĕх тупнă кунта. Хула шăв-шавĕнчен писме ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ вăл. Çулталăк ытла апат пĕçерсе пурăннă хыççăн халĕ ик алла пĕр ĕç тесе мĕн хушнине йăлтах пурнăçлать. Эпир ăна утă тавăрнă чухне чăрмантартăмăр. Нумаях пулмасть Надежда Васильева диспансеризаци тухнă. Тухтăр ăна анализсем лайăхланнине пĕлтерчĕ, холестерин та йĕркене кĕнĕ-мĕн. Типĕ тытни те, кунти уçă сывлăш та витĕм кӳреççех.

Канаш хĕрарăмĕ вăрман хуралçин пӳртĕнче уйрăм пурăнать. Манашкăна тухма та хирĕç мар вăл, анчах та урăхла йĕркене хăнăхаймасран шикленет.

## Турăш

Лидия матăшкăпа Иона аттене Ирçе çармăс тăрăхне килсе тĕпленмешкĕн Герман архимандрит пилленĕ. Герман атте – чăваш, ку тăрăхра çуралса ӳснĕ, халĕ Хусанта пурăнать. Ача чухнех вăл Иверти Турă Амăш турăшĕ патне кĕлĕ тума Матрена ятлă хĕрарăм патне Ирçе Çармăс ялне çӳренĕ. Турăш унта мĕнле лекни – уйрăм истори. Мăнастире аркатма тытăнсан хĕрарăм турăша çунтарса ярасран сыхласа хăварнă. Турă Амăш çавăн чухне хăй пулăшнă теççĕ, пысăк турăш питĕ çăмăллăн туйăннă йăтакана. Матрена ăна килĕнче упранă. Çынсем ун патне таçтан та килсе çӳренĕ. Хĕрарăм хăй виличчен турăша Германа пиллесе хăварнă. Çавăнпа та архимандрит мăнастире çĕнĕрен чĕртессине хăйĕн тивĕçĕ тесе йышăннă.

Матренăн хĕрĕ Раиса турăша хăй çумĕнчен уйăрман. Ял çыннисем каланă тăрăх, Раиса мĕн виличченех çирĕп сывлăхлă пулнă, ватăлсан та хĕр ача пек вăр-вар çӳренĕ. Кил алăкĕ унăн кирек кам валли те уçă тăнă. Турăша туянас текенсем те тупăннă, вĕсем уншăн пысăк укçа та сĕннĕ, çапах ăна сутма килĕшмен. Кайран ялта чиркӳ çĕклесен кăна вăл унта пама килĕшнĕ. Раиса виличчен хăйĕн çуртне чиркĕве халалласа хăварнă.

Иверти Турă Амăш турăшĕнчен пулăшу ыйтма тĕнчен тĕрлĕ кĕтесĕнчен килеççĕ. Çынсен чунне, кĕлеткине сиплени çинчен тĕрлĕ сăмах çӳрет. Турăш Ирçе Çармăс ялне тĕрлĕ инкек-синкекрен хӳтĕленине ĕненеççĕ. Сăмахран, 2010 çулта çывăхрах вăрман çуннă, яла кăшт çеç çитеймен. Çил улшăннă тăк ял кĕле çаврăнма та пултарнă.

## Ĕненӳ пулăшать

Иона манахпа Лидия матăшкă пĕрремĕш хут прихута пырса кĕнине аса илчĕç: «Сĕтел те, савăт-сапа та çукчĕ. Мĕн пурри пеккине сак çине сарса хурса апатлантăмăр. Малтанах урайĕнче çывăрма тиврĕ, алăксене те лартманччĕ-ха ун чух. Хуçасăр вырăна никам та тирпейлесе тăман, строительство ĕçĕсем пынăран кунта пур çĕрте те çӳпçап йăваланатчĕ. Кăмăлăм хуçăлнăччĕ çавăн чухне, анчах эпир çăмăл пурнăç шыраса килмен. Урăхларах кун-çул суйланăшăн нихăçан та ӳкĕнмен эпĕ. Пĕр кун куляннă хыççăн ĕçлеме тытăнтăмăр, çӳп-çапа тасатрăмăр. Йывăр вăхăтра яланах пулăшакансем тупăнаççĕ. Эпир хамăр шăпана турă аллине панă, ĕненӳпе пурăнакана вăл нихăçан та пăрахмасть».

«Манахсен пурнăçĕ çăмăл пулсан пурте унта кайма тăрăшĕччĕç», – палăртать Иона атте. – Кулленхи пурнăçра пирĕн те сахал мар ыйту татса пама тивет, анчах ĕненӳпе чылай çăмăлрах. Çак самантра пулăшу килмесен тӳсме, тăхтама пĕлмелле».

Манахсен пурнăçĕ, чăн та, çăмăл мар, анчах çакăн пирки вĕсем нихăçан та ӳпкелешмеççĕ. Эпир, цивилизацие хăнăхнă çынсем, вĕтĕ шăна, вăрăм туна тапăннăшăнах вăрмана ура ярса пусма ӳркенетпĕр тепĕр чух. Хальхинче те вĕсенчен канăç çукчĕ. Çутăсăр пĕр кун пурăнасси те пирĕншĕн чĕр нуша. Мăнастиртисем çурта çутипе апат çиме, кĕлĕ вулама, ытти ĕçе пурнăçлама хăнăхнă. Пĕçермешкĕн баллонти газпа усă кураççĕ.

– Çăл куçра «сивĕтмĕш» ăсталарăмăр, сĕт юр-варне вăхăтлăх унта упратпăр. Строительствăра электроэнергипе ĕçлекен инструмента алла тытма тивет. Кунта çутă çитермешкĕн 2 миллиона яхăн тенкĕ кирлĕ, кунсăр пуçне тавралли çĕрĕн документне туса çитермелле, – ăнлантарчĕ Лидия матăшкă.

Кăçал ăна çуралнă кун ячĕпе Герман атте пысăк парне кӳнĕ: икĕ ĕне, 24 чăх кӳрсе килнĕ. Хуçалăхра йытăсемпе кушаксем те пур. Пĕр сăмахпа, чăтлăхра пурнăç вĕресе кăна тăрать.

## Ĕçпе пиçĕхеççĕ

Лидия матăшкă кун йĕркипе те паллаштарчĕ. Хĕрарăмсем ирхи 4-5 сехетсенчех тăраççĕ, кĕлĕ вулаççĕ. Çиччĕ çурăра – ирхи апат. Ун хыççăн асли каланине пурнăçлаççĕ. Кама мĕнле ĕç хушассине матăшкă татса парать. 12 сехетре – кăнтăр апачĕ. 30-40 минут каннă хыççăн каллех ĕçлеме тытăнаççĕ. Каçхи апатчен чиркӳ тавралла турăш йăтса çаврăнаççĕ. 17.30 – трапеза, 19.00 – каçхи кĕлĕ. Ун хыççăн каçару ыйтмалли чин. 21.00 сехетсенче уйрăм пӳлĕмсене саланаççĕ. Вырсарни кун ĕçрен канаççĕ, йĕркене çав-çавах пурнăçлаççĕ.

Урăхла пурнăç суйланисем, Лидия матăшкăсăр пуçне, аслă ӳсĕмрисем, пурте тивĕçлĕ канăва тухнăскерсем. Çапах та кашнинех алă майлă ĕç тупса панă. Тĕслĕхрен, Раиса послушница тĕпелте кăштăртататчĕ. Утă çулма, çурт сăрлама тухнисем те пурччĕ. Пахчара та ĕç нумай, кăçал çерем сухаласа çĕр улми, выльăх кăшманĕ лартнă, пахча çимĕç, чечек чылай ӳстереççĕ.

Вырăнти халăх кăна мар, республикăн тĕрлĕ кĕтесĕнче пурăнакансем хăйсен ирĕкĕпе пулăшма килеççĕ, ĕçпе пиçĕхсе чуна тасатаççĕ. Прихута тытса тăмашкăн виçĕ хĕрарăм укçатенкĕ те пуçтарса парать. Çав вăхăтрах усал шухăшлисем те тупăнкаланă-мĕн. Вăрăм сухаллă пĕр арçын Ирçе Çармăсри мăнастире валли тесе Шупашкарта та, Канашра та «кĕмĕл» ыйтса çӳренĕ, анчах кайран çав нухрата пырса паман.

Йĕпреç районĕнче тĕн культури аталансах пырать. Ку тĕлĕшпе вырăнти влаç та тĕллевлĕ ĕçленине палăртмалла. Паян Ирçе Çармăс ялĕнче Сăваплă Троица ячĕллĕ чиркĕвĕн çĕнĕ çурчĕн пĕр пайĕ хута кайрĕ. Строительство ĕçĕсем малалла пыраççĕ.

**Алина ИЗМАН.**

# ТЕЛЕРАДИОПРОГРАММА çĕртме, 16-22

## 16 тунти кун

### 1 КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Сегодня вечером» 16+
14.20 «Время обедать!»
15.15 «На чемпионате мира по футболу 2014»
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «МОРЕ. ГОРЫ. КЕРАМЗИТ» 16+
23.15 «Вечерний Ургант» 16+
23.50 Чемпионат мира по футболу 2014. Сборная Ирана - сборная Нигерии. Трансляция из Бразилии. В перерыве - Новости
2.00 Чемпионат мира по футболу 2014. Сборная Ганы - сборная США. Прямой эфир из Бразилии. В перерыве - Новости
4.00 «В наше время» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 Т/ф «Когда начнется заражение» 16+
9.55 «О самом главном»
10.30 «Дневник Чемпионата мира»
11.00, 14.00, 17.00, 19.20, 21.55 Вести
11.30, 14.30, 17.45 Местное время
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ДЖАМАЙКА» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
18.05 «Прямой эфир» 12+
19.45 Футбол. Чемпионат мира. Германия - Португалия. Прямая трансляция из Бразилии
22.40 Х/ф «ПОД ПРИЦЕЛОМ ЛЮБВИ» 12+
0.55 Т/с «ОТДЕЛ С.С.С.Р.» 12+
2.50 Т/ф «ДОЛГИЕ ВЕРСТЫ ВОЙНЫ»
4.25 Комната смеха

### ЧТВ

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии**
**11.30-11.50 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.45-18.05 Вести-Чăваш ен**

### Россия К

7.00 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.40 Новости культуры
10.15, 1.40 «Наблюдатель»
11.15 Т/с «ПЕРРИ МЭЙСОН»
12.10, 23.20, 1.25 «Мировые сокровища культуры»
12.25 «Линия жизни»
13.20 Д/с «Терри Джонс и варвары»
14.10 Т/с «ДВЕ ЗИМЫ И ТРИ ЛЕТА»
15.10 Д/ф «Живая вакцина доктора Чумакова»
15.50 Х/ф «НЕ ПРОМАХНИСЬ, АССУНТА!»
17.30 Евгений Кисин в программе Дмитрия Ситковецкого
18.10 «Полиглот»
19.15 Главная роль
19.30 Д/ф «Илья Глазунов. Российская академия живописи, ваяния и зодчества»
20.10 «Правила жизни»
20.40 «Спокойной ночи, малыши!»
20.50 «Под небом театра»
21.20 Д/ф «Насколько велика Вселенная»
22.15 «Больше, чем любовь»
22.55 Д/ф «Палачи Хатыни»
0.00 «Кинескоп» с Петром Шепотинником. «Кинотавр»-2014
0.45 К юбилею Жанны Бичевской. «Под гитару»
2.40 Ф. Шуберт. Соната для скрипки и фортепиано. Исполнители Г. Кремер и О. Майзенберг

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.40, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.35, 18.35 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.55 Т/с «ШЕФ-2» 16+
21.50 Т/с «ПЛЯЖ» 16+
23.40 «Сегодня. Итоги»
0.05 Т/с «ЧУЖОЙ РАЙОН» 16+
1.00 «Сталин против Красной армии» 16+
2.00 Х/ф «ДЕЛО ТЕМНОЕ» 16+
3.00 Х/ф «ЗВЕРОБОЙ» 16+
5.00 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА» 16+

### ТВЦ

6.00 «Настроение»
8.20 Х/ф «МЕДОВЫЙ МЕСЯЦ» 12+
10.05 Д/ф «Сергей Филиппов. «Люди, ау!» 12+
10.55 «Простые сложности» 12+
11.30, 14.30, 17.30, 22.00 События
11.50 «Постскриптум» 16+
12.55 «В центре событий» 16+
13.55 «Осторожно, мошенники!» 16+
14.50, 19.30 Город новостей
15.10 Городское собрание 12+
16.00, 17.50 Х/ф «МИСС МАРПЛ АГАТЫ КРИСТИ» 12+
18.20 «Право голоса» 16+
19.50 Т/с «ГРОМОВЫ» 12+
21.45, 1.25 Петровка, 38 16+
22.30 «Фактор газа» 16+
23.05 Без обмана. «Еда с национальным колоритом» 16+
0.00 События. 25-й час
0.30 «Футбольный центр»
0.55 «Мозговой штурм. Происхождение языка» 12+
1.45 Х/ф «СЛЕДЫ АПОСТОЛОВ» 12+
5.15 Д/ф «Золушки советского кино» 16+

### РЕН

5.00 Шоу «Организация Определенных Наций» 16+
5.30, 4.30 Т/с «ВОВОЧКА-2» 16+
6.00, 13.00 Званый ужин 16+
7.00, 12.00, 19.00 «Информационная программа 112» 16+
7.30, 1.10, 3.50 «Смотреть всем!» 16+
8.30, 12.30, 19.30, 23.00 «24» 16+
9.00 Д/ф «Великая тайна Ноя» 16+
10.00 Д/ф «Планета обезьяны» 16+
11.00 «Тайны мира» с Анной Чапман
14.00 «Мои прекрасные...» 16+
15.00 «Семейные драмы» 16+
16.00, 17.00 Не ври мне! 16+
18.00 «Верное средство» 16+
20.00 «Свободное время» 16+
21.00 «Реальная кухня» 16+
22.00 «Пища богов» 16+
23.30, 2.10 Т/с «ХОДЯЧИЕ МЕРТВЕЦЫ» 18+

### Чăваш Наци телекуравĕ

18.30 "Республика" информаци кăларăмĕ
18.45 "Ылтăн çӳпçерен" /6+/
19.00 "Аван-и" /12+/
19.30 "Республика" информационная программа
19.45 "По существу" /12+/
20.00 «Качество» /12+/
20.30 "Открытый регион" /12+/
23.00 «Республика» информаци кăларăмĕ
23.15 «Республика» информационная программа
23.30 «По существу» /12+/
23.45 «Качество» /12+/

### Чăваш Наци радиовĕ

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00 Поэма «Нарспи» в исполнении Ирины Чебановой. (12+) 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 15.30-16.00 Çĕр Сум. (12+) 9.10-10.00 Не формат. (12+) 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 10.30-11.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 11.30-12.00 Рабочая смена. (12+) 12.10-12.30 Страхлав хыпарĕсем. (12+) 12.30-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.30-18.00 Радиовулав. (12+) 18.10-18.30 Страхлав хыпарĕсем. (12+) 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 20.30-21.00 Библи калавĕсем. (6+) 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Тунти кун, ытлари кун, юн кун, кĕçнерни кун, эрне кун**
6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00, 22.00 — Хыпарсем. (12)
8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 — Новости. (12)

### Чăваш радиовĕ

**6.10 Анонс передач**
**6.15 События**
**6.27 Салтак пăтти**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Мамино право**
**7.33 Паянхи кун**
**7.37 Çула тухсан**
**7.51 Мы - вместе**
**7.58-8.00 Погода**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Чĕрĕ шыв**
**18.39 Каçхи юмах**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 17 ытлари кун

### 1 КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 23.45 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15, 21.30 Т/с «МОРЕ. ГОРЫ. КЕРАМЗИТ» 16+
14.00 «Время обедать!»
15.15 «На чемпионате мира по футболу 2014»
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.15 «Вечерний Ургант» 16+
23.55 «Политика» 16+
1.00 «Сборная России. Билет в Бразилию» 12+
2.00 Чемпионат мира по футболу 2014. Сборная России - сборная Южной Кореи. Прямой эфир из Бразилии. В перерыве - Новости
4.00 «В наше время» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 Т/ф «Когда начнется заражение» 16+
9.55 «О самом главном»
10.30 «Дневник Чемпионата мира»
11.00, 14.00, 17.00, 19.20, 21.55 Вести
Света больницăра санитаркăра ĕçлет, ялтан хулана çӳрет. Виçĕ кун килте, пĕрре ĕçре – çакнашкал йĕркепе ĕçлеме килĕшет ăна. Упăшкисем шапашкăран пысăк укçапа таврăннă чухне 6-7 пин тенкĕшĕн ял хĕрарăмĕсем ĕçлеме каясшăнах мар халĕ. Светăн та мăшăрĕ Мускава çӳрет-ха, анчах ăна шанса кăна пурăнасшăн мар хĕрарăм. Акă Владик икĕ эрнелĕхе килне таврăнчĕ. Йăш-чикĕ мĕнле чăтать-ши: пĕр кун та урăлса курмарĕ. Владикăн паха пĕр ен пур – ĕçсен çын умне тухса курăнмасть, кунĕпех çывăрать. Пĕр кĕреçе йăран та чавса памарĕ, çӳпĕ те хускатмарĕ. «Ĕçлесе ывăннă, кантăр», – шарламарĕ Света. Чипер выртакан «пĕренене» мĕншĕн хускатас? Тĕкĕнсенех урасси те инçе мар. Владикăн кăмăлне пĕлсе çитнĕ ĕнтĕ халĕччен. Арçын хуçалăха тĕреклетессишĕн йăшăл та туманшăн пĕрре мар хирĕçӳ кăларнă, урăлла та калаçнă, йăпăлтатса та пăхнă, йăлăнса та... «Кӳршĕ Арçук киле килсен ĕçсе выртмасть, кĕске вăхăтрах вите çĕклерĕç, çурт тăррине улăштарчĕç. Тепĕр урамри Миша валли калăм кунта килсен те тупăнсах тăрать. Эсĕ пур...» – калама сăмах юлмасть Светăн тепĕр чухне. «Эсĕ мана çынсен арçыннисемпе танлаштаратăн-и-ха? Укçаран иртĕхтертĕм сана! Ваççа пек ниçта та ĕçлемесĕр, хĕрарăм ĕнси çинче пурăнмастăп эпĕ! Микитана та амăш пенсийĕ ĕçсе-çиме çитет», – çавнашкал тĕслĕх тупăнсан хăйне çĕнтерӳçĕ евĕрех туять Владик. Ĕçлеме çӳренĕшĕнех ăна алă çинче çĕклесе çӳремелле тейĕн.

Юрать-ха ачасем ӳссе пыраççĕ, хуçалăхра пулăшма тытăнчĕç. Выльăх-чĕрлĕх те пăхаççĕ, пахчара та ĕçлеççĕ. Света дежурствăра чухне те кил вĕсен шанчăклă аллинче. Пысăк ытти ĕçсене Света упăшки çук чухне укçалла пурнăçлаттарать. Мунча кăмаки хута ямаллаччĕ, çынна тытма тиврĕ. Владика шанса çур çул мунча кĕреймесĕр пурăнчĕ çемье. Упăшкаллă хĕрарăм патне йăпăр-япăрах пырасшăн мар çав, чылай ӳкĕтлеме тивет.

Мускавран таврăнсан Владик мĕн пур укçана арăмне тыттарать, анчах çуммĕнчи пулăштухĕ тĕпне тухсанах «кĕленчелĕх пар, сигарет илмелĕх кирлĕ» тесе аптăратма тытăнать. Лавккарине илсе укçа тăкаклама шел. Света ку тĕлĕшпе те ăсланса çитрĕ, Владик килнĕ çĕре сăмакун юхтарса хатĕрлет: «кĕмĕл» те перекетленет, арçын кăмăлĕ те «тутă».

Халĕ пурнăçĕ те йăлтах укçа тавралла çаврăнать çав, унсăрăн пĕр утăм та тăваймăн, уйрăмах ачисене ӳстерме нумай кирлĕ. Кĕçех ывăлĕ шкултан вĕренсе тухĕ, хулана кайĕ. Унта кам усрĕ ăна? Хваттер тара тытма та хаклă. Света ачисене валли Шупашкарта пӳлĕм туянма ĕмĕтленет. Çакăн пирки калаçу пуçарсан Владик яхăнне те ямасть: «Манпа пĕрле çӳретĕр, хăй ĕçлесе туянтăр», – ашшĕн пĕр сăмах. Арçын ача аслă шкула вĕренме кĕрес ĕмĕтпе пурăнни те кăсăклантармасть ăна. «Хĕрсене те пĕрле шапаша илсе каятăн-и?» – тарăхать амăшĕ. «Вĕсене кавча паратăп – ĕçĕ те пĕтнĕ», – парăнмасть арçын.

Икĕ эрнере упăшкинчен йăлăхсах çитет хĕрарăм. Вăл тухса кайсанах лăштах сывласа яраççĕ.

**Алина ИÇĔМПИ.**

ШĂПА

# Шухă çамрăклăх

Пусмапа хăпаракан Настя антăхса каясла макăракан ача сассине илтсен хăй сисмесĕрех тăп чарăнчĕ. Ури итлеми пулчĕ тейĕн, ăна темĕнле вăй-хăват çавăрса ячĕ... "Э-э-э, кунта юрамасть, кунта пепкесемпе амăшĕсем выртаççĕ. Эсир хăвăр палатăна хăпарăр!" – тесе хыттăн калани те чараймарĕ ăна.

Палатăра та хăйне валли вырăн тупçаймарĕ хĕрарăм. Телефонне çавăркаларĕ, амăшĕпе калаçассшăнччĕ – унăн кăмăлне хуçас темерĕ. Ахаль те нумай пăшăрхантарнă ăна. Куççулĕ вара пит тăрăх тумларĕ те тумларĕ. Ĕсĕклекен Настьăна чунран шеллерĕç палатăри хĕрарăмсем.

Настя юлашки вăхăтра çур çулта пĕрре больницăра сипленет. Юн кайнипе аптраканскере "васкавлă пулăшупа" пĕрре кăна мар илсе кайнă хыççăн тухтăрсемпе çыхăну тытать халĕ вăл. Вĕсен сĕнĕвĕсене йăлтах пурнăçлать. Анчах... Çамрăк чухне вĕсем каланине шута илмелле пулнă та çав...

Пĕрремĕш хут гинеколог патне Настьăна амăшĕ алăран çавăтса тенĕ пек илсе кайрĕ. Хырăм айĕ ыратнипе шкула та каяйми пулчĕ те хĕрĕ...

16 çулти Настя амăшĕнчен мĕн пытарни тухтăр патĕнче уçăмланчĕ. Любовь Ивановна хăй шкулта ĕçлесе те ачине пăхса çитерейменнишĕн ĕсĕклеме тытăнчĕ. Настя кунĕпе куç умĕнче темелле. Хăш вăхăтра тата кама парнелеме ĕлкĕрнĕ вăл хĕрлĕхне? Ыйтăвăн хуравĕ хыçа юлчĕ. Настьăна сиплесси пĕрремĕш вырăна тухса тăчĕ. Инфекцие пула çул çитмен çамрăкăн ар органĕсем шыçнă. Хытах аптранине кура стационартах сипленме хушрĕ тухтăр.

Любовь Ивановна çакăн хыççăн хĕрĕ улшăнасса шанчĕ.

Анчах сиплев курсĕ вĕçленнĕ-вĕçленмен Настя юлташĕсем патне васкарĕ. Амăшĕ халĕ те ăна кĕтсе илеймесĕрех тĕлĕрсе каять.

Любовь Ивановна тăрăшнипе кăна хĕрĕ аслă шкул студенчĕ пулса тăрать. Анчах çĕрлехи дискотекăсене пулах-тăр Настя пĕрремĕш сессие те параймасть. Асли çине тăнипе куçăмсăр майпа вĕренмешкĕн куçарма май килет. Амăшĕ ăшталанса çӳремесен алла диплом тытса кураймĕччĕ те пуль Настя.

Хĕрĕ вĕренӳрен пушă вăхăта мĕнле ирттернине пурнăç панă çынни курмасть тесен те юрать. Упăшки тухса кайнă хыççăн хĕрарăмăн хăйĕн вăйне кăна шанма тивет. Шкул хыççăн хăш-пĕр ачапа тӳлевлĕ уроксем ирттерсе Настьăн вĕренĕвĕшĕн тӳлемешкĕн укçа пухать вăл.

Çамрăкки вара тусĕсенчен уйрăлаймасть. Амăшĕ пĕлĕшĕсем урлă ĕç шырани кăлăхах пулнине часах ăнланса илет. Юратнă тĕпренчĕкĕн "пилĕк авасси" пуçра та çук: вĕренет вăл имĕш.

Любовь Ивановнăн кунашкал лару-тăрупа çырлахмалли кăна юлать. Хĕрне йывăр ĕçлеттерме шикленет те вăл. Хырăм айĕ ыратнипе час-часах аптрать-çке. Дачăра тăрмашнă хыççăн тата юн кайма тытăннăран больницăрах сипленмелле пулса тухрĕ. Анчах Настя сиплев курсĕ вĕçленичченех килне таврăнса амăшне пăшăрхантарчĕ. Пĕрремĕш хутри палатăна хăйпе пĕр вăхăтри çамрăксемпе выртторчĕç ăна. Пĕр каçхине тата çаксем урама уçăлма тухма шут тытаççĕ. Урамра - чăтмалла мар шăрăх. Пĕри сăра ас тивме сĕнет. Ку шĕвек хыççăн хаярри сĕтел çине тухса ларать. Хаваслă ушкăнри хĕрсенчен пĕрин Света пĕр кун маларах çуралнă иккен.

Тул çутăласпа тин таврăнаççĕ вĕсем. Чӳречерен кĕреççĕ те тӳрех тутлă ыйхăна "тӳнеççĕ". Мăнтарăнсем, палатăна тухтăрсем кĕнине те сисмен. Мухмăрлăскерсене çапла хăйсене ирĕклĕн тытнăшăн килĕсене ăсатмалли кăна юлнă.

Тĕпренчĕкĕн хăтланăвĕшĕн намăсланса Любовь Ивановна тӳрех ĕсĕкleме тытăнать. Ара, больницăра унăн вĕренекенĕсем те, пĕлĕшĕсем те ĕçleççĕ. Кун хыççăн Настя амăшĕ каланине итленĕ пек пулать. Ĕçе вырнаçать. Анчах та темиçе уйăхлăха кăна çав.

Каллех çĕрлехи дискотекăсем пуçланаççĕ.

Чун-чĕринче черчен туйăм амаланма тытăнсан Настя улшăнать. Пĕр курсри Сашука килĕштерет вăл. Лешĕ темиçе çул хыççăнах тенĕ пек çӳренĕ хыççăн тинех пике кăмăлĕ çаврăнать. Каччă вара пачах шавлă вырăнсене юратмасть. Майĕпен савнине те пистерет çĕрлехи клубсенчен.

Юратакансем пĕрле пурăнма тытăннишĕн пуринчен ытла Любовь Ивановна хĕпĕртет. Вăл хĕрĕн пурнăçĕ майлашăнса кайтăр тесе çамрăксене хваттерĕнче хăварать. Хăй вара амăшĕ патне куçать. Сашук уншăн тăван ывăлĕ пекех çывăх. Ĕçмест, çителĕклĕ ĕçлесе илет. Пĕтĕм мулне çемье валли тăкаклать. Пĕррехинче тата ăна тинĕс хĕррине канма кайма путевка туянса пачĕ. Дачăра та пулăшать. Настьăна пĕччен пăхса ӳстернĕшĕн тав туса пĕтерейместер.

Анчах кĕрӳшĕ юлашки вăхăтра салхуллăн çӳрени шухăша ямасăр пултараймасть хĕрарăма. Тӳрремĕнех ыйту пама та шикленет вăл. Сашук пĕлĕшĕсен ачисемпе вĕçĕмсĕр вылянине сăнанă май ыйтусем хăйсен тĕллĕн "çухалаççĕ".

Килĕнче пепке сасси янăраманран упăшки Настьăна ӳпкев сăмахĕ каласа курман. Анчах сывăх сыннин салхуллă куçĕсем чĕрене шăтарса тухасла ыраттараççĕ...

**Надежда КУДРЯШОВА.**

АХ, АНЧАХ...

# Хĕр ĕмĕрĕпе савăнаймарăм

Упăшкам «хĕрӳ точкăра» çар хĕсметĕнче тăнă, контузи пулнă унăн. Ăс-тăнĕ пăсăлнине çакăнпа та сăлтавламалла-тăр...

Ваньăна эпĕ çав тери хытă юрататтăм. Повестка килсен савнине çара ăсатрăм. Вăл вăрçа лекрĕ. «Чĕрĕ таврăнтăрччĕ çеç», – тесе кашни кун кĕлĕ туса пурăнтăм, куляннипе çĕрĕ-çĕрĕпе çывăраймасттăмччĕ. Çӳлти хăват манăн сăмахсене илтрĕ, Ваньăна тăхланран çăлса хăварчĕ. Анчах чунне ĕмĕрлĕхе амантса таврăнчĕ вăл унтан. Пачах урăх çын евĕр туйăнатчĕ савни: сăнĕ-кĕлетки те улшăннă, кăмăлĕ те унченхи пек мар. Асăрханса каламан сăмахшăн тӳрех тарăхса каятчĕ, аллине çĕклетчĕ. Пĕрлешиченех çапла хăтланнине никама та каламан эпĕ. Каччăн чун суранĕ тамаласса, пуçне ăс кĕрессе шанаттăм.

Юлташĕсемпе вĕçĕмех пуçтарăнса ĕçетчĕç. Ваня ӳсĕр чухне эпĕ унран хăраттăм, киле тараттăм. Вăл мана ялĕпех шыраса утатчĕ, хĕр тантăшăмсенчен ыйтса тĕпчетчĕ. Шăв-шав çĕклесрен шикленсе ун патне тухаттăм. Килтисем уменче аван мар-çке. Ун чухне каччă – хĕр патне, хĕр каччăн килне кĕрес йăла пулман. Хĕр чысне типтерлĕн упраса пурăнтăм эпĕ. Пĕрлешсен юратнă çынна парнелеме ĕмĕтленеттĕм. Анчах Ваня ӳсĕрле манăн кăмăла шута хумарĕ, выльăхла хăтланчĕ. Тĕттĕм урамрах мана çĕре пусса ӳкерчĕ... Кайран вăл мана хăйĕн килне илсе кĕчĕ. «Паянтан Роза манăн арăм шутланать, вăл çакăнта пурăнма тытăнать», – пĕлтерчĕ амăшĕпе йăмăкĕшăллĕне. Тепĕр уйăхранах эпир туй туса пĕрлешрĕмĕр.

Хăналăх хĕр ĕмĕрĕпе савăнса юлаймарăм эпĕ. Ваня çарта чухне каччăсемпе калаçса та курман темелле, икĕ çул куççуль тăксах иртрĕ. Кайран та юратупа хĕмленсе киленсе çӳресси пулмарĕ. «Кавча тухмастăп», – тесе калама хал çитерейменнишĕн чылай ӳкĕнме тиврĕ. Çамрăк та айван пулнă çав, атте-аннерен хӳтлĕх ыйтма вăтаннă, вĕсем хамах ятласа тăкасран шикленнĕ.

Каç пуласран чун вырăнта марччĕ, мĕншĕн тесен упăшкапа ар хутшăнăвне кĕресси маншăн тамăкпа танахчĕ. «Çынсем киленӳ пирки калаççĕ, эпĕ урăхларах этем-ши?» – ăнланмастăм хама. Сивĕ хĕрарăм арçынна килĕшеймĕ паллах. Ваньăн та еркĕн тупăнчĕ, вăл çакна пытармарĕ те. Эпĕ ача кĕтеттĕм ун чухне. Айккинелле кайса килсен те упăшка ман патах çулăхатчĕ. «Сана кăна юрататăп, мана санпа çеç лайăх», – тетчĕ хăй. Эпĕ ăна хам çумран тĕртсе яраттăм, кайран çакăншăн патак çиеттĕм. Арçын пур пĕр хăйĕн ĕçне тăватчĕ... Хĕрарăма мăшкăлласа киленӳ илекенсем пирки ахальтен кала-

маççĕ иккен, манăн упăшка та çавсенчен пĕри пулĕ теттĕм.

Вĕçĕм макăрнипе пепке чирлĕ çуралчĕ, чĕри хавшакчĕ. Ăна сиплеме ăçта кăна çитмерĕмĕр-ши? Пĕрех ывăлăм сусăр юлчĕ. «Йĕркеллĕ ача çуратаймарăн», – тесе хуняма «çисех» яратчĕ. Тĕпренчĕкĕме илсе ку килтен аякка тухса тарас килетчĕ манăн. Тĕлĕкре те вĕçĕмех такам хăвалатчĕ, пусмăрлатчĕ... Типнĕ çеçке пек хăрса ларнипе «ниçтан ним тытмалăх та çукçке çак хĕрарăмăн» тесе вĕçĕмех кăмăлсăрланчĕ упăшка. Хăй вара еркĕнĕсен çавра вырăнĕсем, тулли кăкри çинчен каласа парса рехетленетчĕ.

Ывăлăмпа больницăра сипленнĕ чухне пĕр хĕрарăмпа паллашрăм. Вăл мăнукĕпе пынăччĕ. Кинĕ çăмăлланнă чухне ĕмĕрлĕхе куçне хупнă иккен. Клавдия Петровна тăванран хаклă туйăнчĕ, чунрине йăлтах ăна уçса патăм. Çармăс хĕрарăмĕ ман тĕле вĕçсе аннă пирĕшти евĕрех туйăнчĕ. Анне пĕчĕк чухне ачашласах ларман, айăпа кĕнĕ тĕк патакпа хĕненĕ. Çакнашкал ăшăлăх курман эпĕ. «Хĕрĕм, хаклăскерĕм», – тесе каланине те халĕччен илтменччĕ. «Тар хĕрĕм çав шуйттанран. Унсăрăн ачу та сывалаймĕ, хăв та хĕне кайăн», – тесе куçăма уçрĕ ырă кăмăллă хĕрарăм.

Халĕ эпĕ кунтан аякра пурăнатăп. Упăшка шыраса тупса вĕлересрен çав тери хăраттăм малтанах. Хама алла илмешкĕн, пурнăç тĕллевне тупмашкăн мана Клавдия Петровна пулăшрĕ. Вăл, психолог пулнă май, мана нумай сĕнӳ-канаш пачĕ, хăйĕн хӳтлĕхне илчĕ. Ăна эпĕ «анне» тесе чĕнетĕп, унăн ывăлĕ – манăн юратнă мăшăр.

**РОЗА.**

**/Малалли.**
**Пуçламăшĕ иртнĕ номерте/.**

Сумлă евче, ăслă-тăнлă старике, хĕр çĕре çити тайăлса пуç çапать, чĕркуççинчен тытса ыталать.

– Хисепе хурса килнĕшĕн пĕлĕт евĕр пысăк тав! Пысăк тав та тавтапуç! Пире Пӳлĕх ырлăх кӳтĕр, Пихампар хăй кĕтӳ хăваласа килтĕр! – пытармасть шухăшне пирĕн хĕр.

– Çураçу пулсан хĕре пĕрлех лартса кайăттăм! – тӳсеймест шухăшне калаймасăр евчĕ.

– Ах, евчĕ апла мар! Тинĕс урлă сиксе каçаймăн... Сави санăн пит яка. Авланас ĕмĕтли чăнах та лайăхи? Манашкал шухăшлама пĕлет-ши? Мана атте-анне хаклăран та хаклă халал хăварнă: хала халăхшăн хума хушнă. Кунсăр пуçне, манăн хам кăмăллакан ĕç тата тивĕç пур. Хăнăхнă хăмăта хывасси хĕн. Апла туни те, капла туни те леш тĕнчене асăрхамасла кĕрсе ӳкнипе пĕрех. Çитменнине йĕкĕт мĕнпе кăсăккине те пĕлместĕп. Хăш-пĕр йĕкĕт çĕрĕк тункатана та тăмасть.

– Атăлпи чиперккемĕр! Пирĕн йĕкĕтшĕн çутă çăлтăр пулсамăр! – тилмĕрет Шур сухаллă евчĕ.

– Чĕрем Раççейшĕн тапать. Йĕкĕт хăш патшалăха пайта кӳрет? Хĕрпе пĕр шухăшлă йĕкĕт ансатах тупаймастăн çав.

– Пирĕн йĕкĕт те çутă тĕнчешĕн вăй хурать. Эппин, сирĕнпе пĕр шухăшлă вăл...

– Юрĕ, анчах мĕншĕн-ха çураçма хăй мар, эсир килнĕ? Йĕкĕтĕмĕр çинчен çĕннине пĕлес килет. Çынна пĕлме пĕр пăт тăвар çисе ямалла теççĕ.

Атăлпи хуравĕ уçăмлă: çураçмашкăн йĕкĕт хăй кунта килтĕр! Ман юхăмпа çирĕп пĕрлешес кăмăлпа çӳретĕр...

– Ерлĕк тытса ан кай! Ан кӳрен! Пӳлĕхçĕмĕр, пар пире телей! Пихампартан выльăх кĕтетпĕр! Йĕкĕтпе çуркунне тĕл пуласчĕ. Тен, тинĕс хĕрринче курнăçăпăр?

Илтмен-пĕлмен йĕкĕтпе тĕл пуласси хĕре илĕртет те, иккĕлентерет те. Юлашкинчен алă кăна сулать, татăклăн хирĕçлесе калать:

Сăлтавсăр мухтатăр йĕкĕте,
Чечексем памарĕ пĕрре те.
Анлăшĕ ун чылаях катăк,
Сыпасчĕ хуть пĕр татăк.

Евчĕ васкамасăр ура çине тăрать, хапха еннелле утать. Каяс хĕр ăна чарать:

Хăвăрт çаврăнăр-ха каялла,
Тăхтăр кăштах, ан васкăр!
Йĕкĕт хăй килтĕрччĕ ман пата,
Ман хăйне курас килет!

Çураçма килсе пысăк хисеп тунăшăн калама çук пысăк тав. Аттерен те, аннерен те. Иккĕшĕ пĕрле мана уçăмлăн халалланă: хала халăхшăн хумалла, юлашки сывлăшчен уншăн тăрăшмалла. Пĕр ыйту канăç памасть: эпĕ Дунай патне куçса кайсан кунти хирсене кам шăварĕ-ши? Çакăнти вăрмансене кам пăхĕ?

Атăлпи мĕн каланине тăнласантăнласан евчĕ çамкине шухăшлăн кăнтăр тăвĕсем пек картлантарчĕ. Тепĕр ирхине кунта килнĕ çулпах каялла çул тытрĕ. Кустăрмасем кичемленмесĕр тăнкăлтатрĕç, Атăл хĕрринчи хурамасем çӳлелле яшт çĕкленчĕç.

*Атăлпин хĕр йĕрри*
Утрăм, утрăм эп утма çулпа,
Утаясчĕ манăн мăн çулпа.
Куртăм нумай тертне, хурлăхне,
Кураясчĕ пурнăç ырлăхне.

– Паллах, пушмак лайăх, атă вара татах та лайăхрах. Иккĕленместпĕр: Сĕве анлă, Атăл вара татах та анлăрах. Пурте пĕлетпĕр: Днепр, Дон тата Дунай – шутсăр лайăх юхан шывсем, анчах хăйсен чапĕпе Атăлпа танлашаймаççĕ, патне те пыраймаççĕ. Аппамăр çинчен итлесемĕр манăн шухăша.

*Йăмăкĕн Сĕвепин сĕнĕвĕ*
Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать,
Шыв юхать те чул юлать.
Шухăшлăр-ха, тăвансем,
Ĕмĕр иртет, кун юлать.

*Иван ТЕНЮШЕВ*

# Атăлпи хуравĕсем мухтавлă

***Чăваш халăх халапĕ***

Çырма хĕрринелле ансассăн
Кули уру сан йĕпенмест?
Шăпамăр пирки шутласассăн,
Нивушлĕ пуçăр хĕсĕнмест?

Килсен хуçи садне курмашкăн
Ташлать улми, ал çупать çулçи.
Килсессĕн евчĕ çураçмашкăн
Вĕри тапать пике чĕри.

Ах, аттеçĕм, ах, аннемĕр,
Чĕрем çунать, ăш пит вăркать.
Мĕнле-ши ирттĕр пирĕн ĕмĕр:
Те каймалла, те юлмалла?

Кайсан лайăх-и, юлсан лайăх-и,
Чуна уçса сӳтсе явар.
Маншăн пулсан кайни лайăх,
Юлни тата лайăхрах.

Тăван йăмăксемпе шăллăмсем!
Ан уйăрăр мана хăвартан.
Манпа пĕрле çул та кĕскелет,
Юхăма май ишмешкĕн ансат.

Кĕтместĕп эпĕ ылтăн-кĕмĕл.
Ман ĕмĕр ирттĕрех хĕрле.
Пурнăçлантăр çап-çутă ĕмĕт:
Çӳресчĕ Раççейпех пĕрле.

Йăмăкĕсемпе шăллĕсен хушшинчен чиперкке Сĕвепи маларах тухса тăчĕ. Вăл хĕпĕртĕвĕпе хĕмленӳллĕ, илемĕпе илĕртӳллĕ, пур пĕр астаруллă мар. Аллине çӳле çĕклерĕ те çапла пĕлтерчĕ:

Аппаçăм, сăну хитре,
Кулă çиçтерет питре.
Эсĕ чăннипех тăван.
Кил-ха, чăпăрт чуп тăвам!

Çĕннине шыранă чух
Киввине те ан çухат.
Саватăн пулсан мана
Ан хăварччĕ тăлăха.

Сарă кайăк юрласси
Улăх ути çуличчен,
Çĕр-шывшăн вăй хурасси
Пӳлĕхçĕ хушнă кунччен.

Шурă Атăл хĕррийĕ
Пĕтĕмпех шурă йĕтĕн.
Кăвак Атăл хĕррийĕ
Талккăшпех кăвак йĕтĕн.

Эпир пурте пĕр тăван!
Пăрăнтăр шăна-пăван!
Пĕр шутлă эпир пурте!
Çавăншăн эс хĕпĕрте.

Пирĕн пĕрешкел тĕллев:
Тăван çĕршĕн юх, кĕрле!
Тумламран кӳлĕ пулать
Тăрăшсан пурте пĕрле.

Сĕвепи хăвăрт Атăлпи умне пырса тăчĕ, ăна ыталаса чуп турĕ, ăшă-ăшă сăмахсем каларĕ:

Эсĕ пурри – пирĕн пуянлăх!
Эсĕ пурри çĕр-шыв тĕрекĕ!
Эсĕ пурри – чĕре ăшши!
Чунпа пулсам ĕмĕрех çамрăк!
Ялан пул пирĕнпе пĕрле.
Эс пирĕншĕн ылтăн пек хаклă,
Ирттерех ĕмĕрне хĕрле!

Атăлпи пичĕ çап-çутă çуталчĕ. Йăмăкĕ мĕн калани савăнтарать аппăшне.

– Юрру та, унăн ырă кĕвви те – чун валли, сăмахĕсем – чĕре валли! – уçăмлăн палăртрĕ кăмăлне Атăлпи. – Йăмăкăм! Кĕмĕлĕм! Эсĕ мĕн калани пĕтĕмпех пурнăçлантăр! Мĕн ĕмĕтленни пирĕн çутă элем пултăр!

Сĕвепи пике аппăшĕ Атăлпи еннелле çаврăнчĕ те йăрăс пĕвне-юхăмне кăтартрĕ.

Атăлпи йăмăкĕсемпе шăллĕсем пурте янкăс саслă. Шур Атăл сасси татах та уçăмлăрах. Вăл пурне те çапла йыхравлать:

– Раççей! Тухăçалла пăхар! Раççей! Малалла утар! Пурсăра та салам! Шуçăм курма васкар! Çутă çăлтăртан ан юлăр! Хĕвел патнелле кармашăр!

Атăлпи йăмăкĕсемпе шăллĕсен йышне Шăнкăртам хĕрринчен, Алманчă ялĕнчен Тимĕрçĕ Кĕркурийĕ пырса тăрать. Мăлатукĕ шак! шак! Çут тимĕрĕ чанк! чанк! Вăл пурне те çапла пĕлтерет:

– Типĕ çăкăр виç кунлăх! Çутă Тимĕр тутăхиччен! Эпир Атăлпа туслă ĕмĕр-ĕмĕрех!

Мĕнех вара, ĕмĕрсем иртнĕ май вăхăт çынсене хăйсене те, вĕсем ăнкарăвне те урăхлатать, улăштарать. Тăван çĕр-шыв пĕрре кăна. Мăн Атăл пек асамлă юхан шыв та урăх çук. Çак тĕрĕслĕхе пĕр ĕмĕр хыççăн тепри çирĕплетет. Истори тĕрĕслĕхĕ ĕмĕрлĕхех тăрса юлать. Атăла юхан шывсен амăшĕ тесе шутлаççĕ. Юпписен аппăшĕ вырăнне хуракансем те пур. Мĕн пирки унашкал хаклаççĕ-ши? Тем тери анлă та аслă пулнăран-ши? Хăй тавра нумай-нумай юхан шыв пуçтарнăран-ши? Атăла ик çĕр ытла юпа юхса кĕрет. Çав шутра Чулман Атăл /Кама/, Ука Атăл /Ока/, Сăр, Сĕве тата ыттисем.

Акă халь вĕсем пурте юнашар карталанса тăчĕç, аппăшне мухтаса та тав туса юрă янăратма пуçларĕç.

Аслă Атăл хăех çур тинĕс.
Ашшĕпелен амăшĕ хĕрне
Савса та юратса ӳстернĕ.
Яштак ун пĕвĕ, сăнĕ хитре,
Хура çăкăрпалан çитĕннĕ.

Ай, юхан шыв, аслă юхан шыв!
Хăватлăн эсĕ юхатăн.
Сывлать санпа, ӳсет çĕр-шыв,
Яш-кĕрĕмĕр туянать ăс-тăн.

Атăл хĕрри тăршшĕпех хăва,
Шурă Атăл хĕрри шур йĕтĕн.
Аслă аппа пулсам эс хăвах,
Кĕçĕннийĕ уншăн ан хĕртĕн.

**/Малалли пулать/.**

## СĂВĂ СĔВЕМĔ

*Анатолий ЮМАН*

### Юрату вăрттăнлăхĕ

Çут хĕвел ялтăрать –
пурнăç ашшĕ,
Вăл пурне те телейлĕ тăвасшăн:
Пĕрешкел парнелет ăшшине,
Уйăрмасть Çĕр-анне ачине.

Эппин, ма шăпасем пирĕн тĕрлĕ?
Ыр курса пурăнмашкăн мĕн кирлĕ?
Чи кирли-мĕн – таса юрату,
Вăл пур чух килсе çитĕ тату.

Юрату – пысăк туйăм, асамлă,
Ăна кам ывăлĕ-хĕрĕ ăмсанмĕ?
Тепĕр чух вăл килет ăнсăртран,
Вăй илет тепĕр чух катаран.

Юратма пĕлекенĕ телейлĕ,
Пурнăç çулĕ унăн –
вăрăм, тĕллевлĕ.
Кашни çын пурăнасшăн çапла.
Чăн телей ăшăтать кун-çула.

Юрату çиçĕм евĕр хăватлă,
Икĕ чун пĕрлешсен вашаватлă.
Упрамашкăн ăна ансат мар,
Пач сӳнме те пултарĕ кăвар.

Юрату кăварне упрамашкăн
Пĕлмелле, вутпала пит ан ашкăн.
Чи малтан мĕн шута илмелле?
Пĕр-пĕрне каçарма пĕлмелле.

Юратма пĕлекенĕ телейлĕ...

*Микул ПУЛАР*

* * *

Ывăнтăн-ши, ывăнтăн – савса?
Çĕмрĕк куç кĕскийĕр. Тахăш ватнă.
Сак çинче ларать тепри çунса –
Çавă, тен, кил-çуртăра пăлхатнă?

Куçăр пулĕ улшăнать çапла?
Çут çанталăк курăнать сăпатсăр?
Хăнăхнă эсир ăна апла.
Савнă сăнсăр – шанчăксăр вăл,
латсăр.

Мĕн – çунни? Мĕн пурăнни
вăрçса?
Хыпăнса теприн енне пăхатăн.
Çĕмрĕк куç кĕски умне тăрса
Хăвна ху хирĕçлеме хăятăн.

Ав теприн те кăмăл çаврăнать,
Пурăнăç хăй еккипех юртасшăн.
Кун йӳççи пыл эрнене пырать,
Юратма хăнăхтармасть юлташăм.

*Елена СОБОРОВА*

### Тăван тавралăха

Тикаш урамĕпе
Мăнаçланса иртесчĕ,
Асамлă çутипе
Тăван киле çитесчĕ.
Çаран-улăхсемпе
Сукмакпала çӳресчĕ.
Уйри чечексемпе
Пӳрте илем кӳресчĕ.

Хĕвел ытамĕнче
Ача пек хĕртĕнесчĕ.
Сап-сар пучахсене
Ачашшăн сĕртĕнесчĕ.

Вăрман сывлăшĕпе
Чĕре тулли сывласчĕ.
Уй-хир анлăшĕпе
Чуна уçăлтарасчĕ.

Ялти тантăшăмпа
Кăмăлăма сиплесчĕ.
Тăван ял-йышăмпа
Чун каниччен пуплесчĕ.

Манми тавралăхра
Ачалăха тупасчĕ.
Юратнă халăхра
Хам кун-çула курасчĕ.

Вăрмар районĕ.

ПĔЛМЕ ИНТЕРЕСЛĔ

# Махатма Ганди

**Махатма Ганди /Мохандас Карамчанд Ганди / 1869 çулта Индири Гуджарат хулинче çуралнă. 1948 çулта Делире вилнĕ. Индири наци ирĕклĕхĕн юхăмĕн идеологĕсенчен тата ертӳçисенчен пĕри. Г.Торо тата Лев Толстой идейисене тĕпе хурса вăйпа усă курмасăр кĕрешес философие никĕсленĕ. Философ, реформатор, политик.**

**Вăйпа усă курас мар идейăна халăхра сарас тĕлĕшпе ĕçленĕскер виçĕ революци пуçарнă: колониализма, расизма тата вăрçа хирĕç.**

**Тăрăшни, чăн та, сая кайман – 1947 çулта Инди аранах Британирен ирĕклĕх илнĕ.**



## Право хӳтĕлевçи

Арçын ача Гуджаратри купса чаплă çемйинче çуралнă. Ăна халăх йăли-йĕркине тĕпе хурса воспитани парса ӳстернĕ. 1883 çулта вун виççĕри ачана хăйпе тантăш Кастурбаи хĕре качча илсе панă. Чăн та, ку каллех йăлапа килĕшсе тăнă. Каярахпа каччă Аслă Британие юриста вĕренме тухса кайнă. Çакна пула йăх-несĕлтен татăлма тивнĕ унăн – ашшĕн ĕçне малалла тăсман-çке вăл. Анчах та Британи дипломĕпе Индире вырăнти саккунсене пăхăнса ĕçлеме кăткăс пулнă. Çапах та Бомбее адвокат пулса вырнаçнă вăл. 1893 çулта вара Гуджарат суту-илӳ компанийĕ Кăнтăр Африкăра юрисконсульт вырăнне сĕннĕ. Ентешĕсен ытла та йывăр шăпине çакăнта пĕрремĕш хут асăрханă та вăл. Ганди Индире "Симĕс кĕнеке" пичетлесе кăларнă. Унта индуссене Кăнтăр Африкăра ĕçлесе пурăнма мĕн тери йывăр иккенне каласа кăтартнă. Ĕç шăв-шав çуратнă, унпа пĕрлех юрист ячĕ чапа тухнă.

Ĕç вырăнне Кăнтăр Африкăна таврăнсан ăна шурă ӳтлисем чутах туртса çурман. Гандие вĕлересле хĕненисене тупса айăпламашкăн министр хăй хутшăннă. 1899 çулта Англипе вăрçă пуçлансан Ганди санитари отрядне йĕркеленĕ, хăюлăхшăн ылтăн медале тивĕçнĕ. Чăн та, акăлчансене пулăшас тĕллевпе тăрăшман вăл – аманнисен асапне чакарас килнĕ унăн.1906 çулта та зулуссем пăлхав çĕклесен çакăн пекех ĕçленĕ вăл. Пăлхава Британи питĕ хаяррăн путарнине кура Ганди Анăç цивилизацине шанма пăрахнă.

Çак тапхăртах вăл халăхшăн пурăнма тĕв тунă. 1904 çулта "Феник" ушкăн йĕркеленĕ. Унăн членĕсем çĕр ĕçĕпе пурăннă, çĕр-шывĕпех паллă "Индийское мнение" хаçат кăларса тăнă.

1907 çулта Кăнтăр Африкăра индуссен пурнăçĕ йывăрлансах çитнĕ. Ганди каллех çакна хирĕç тăрать. Индуссем пăлхав çĕклеме те пултарнă. Ганди хирĕç-тăру принципне сĕнет – вăйпа усă курмасăр кĕрешмелле /сатьяграх/. 1908 çулта вăл ертсе пынипе британсене хирĕç митингсен, забастовкăсен, бойкотсен кампанийĕ пуçланать. Гандие, паллах, арестлеççĕ. Тĕрмерен вăл 1909 çулта тухать, тӳрех малалла кĕрешме пуçлать. Çĕнĕ пĕрлĕх "Ферма Толстого" йĕркелет. Ăна Инди хăй тытăмлăх /"сварадж"/ йĕркине тĕпе хурса никĕслет. 1914 çулта Ганди çине тăнипе çапах та саккунăн индуссене ытла та мĕскĕнлетекен йĕркисене пăрахăçлама май килет.

## Вăйпа усă курмасăр

1915 çулхине Ганди Индие çĕнтерӳпе таврăнать. Унта вăл "Сатьяграха ашрам" пĕрлĕх йĕркелет. Унта каста членĕсене те йышăннине кура хăшĕпĕри хирĕçлеме пăхать. Ганди вара тĕн вĕрентĕвĕпе хуравлать – çынсен пĕр-пĕринпе хутшăннă май чăрмавсене сирме хăнăхмалла. 1917 çултан пуçласа вăл çакăн пек пĕрлĕхсене акăлчансем индуссене ытларах хĕсĕрлекен райончен те йĕркелеме пуçлать. 1919 çулта Роулетт сакунĕ тухать – политика мероприятийĕсене влаç ирĕк памасăр йĕркеленĕшĕн репрессие вăйлатать вăл. Ганди майлисем ăна хирĕç те меслет шухăшласа тупаççĕ – "Тĕрмесене çынсемпе тултарар" лозунг йышăнать Махатма.



1919 çулхи ака уйăхĕн 6-мĕшĕнче Инди хулисен урамĕсене çынсем тухаççĕ. Индуссемпе мăсăльмансем пĕр пулса политика лозунгĕсем кăшкăраççĕ. Гандипе унăн çыннисем пĕр хуларан теприне çитсе митингсенче тухса каласаççĕ. Колони администрацийĕ çар режимне пĕлтерет, демонстранстсене полици хĕнет. Хăш-пĕр çĕрте пухăннисен енне переççĕ те. Çак лару-тăрура Ганди авторитечĕ ӳснĕ кăна. Вăл Инди наци конгресне кĕнĕ, тӳрех унăн ертӳçисенчен пĕри пулса тăнă.

1921 çулхи чӳк уйăхĕнче халăх Инди купсисене, Уэльский принца кĕтсе илекенскерсене, хĕненĕ. Пăлхавçăсене лăплантарма хулана Ганди килсе çитнĕ – вăйпа усă курмалла мар. Анчах урнă çынсене чарма çăмăл мар. 1922 çулта индуссемпе Англи полицийĕ хушшинче каллех хирĕç-тăру сиксе тухнă. Халăх пакунлисене будкăна хупса çунтарса янă. Çĕр-шыв ертӳçисем аптраса çитнĕ – вăрçă пуçламалла-и е ирĕклĕхшĕн кĕрешме пăрахмалла-и? Ара, халăх вăйпа усă курмалла маррине йышăнмасть-çке. Ганди иккĕмĕш çула суйлать. Унăн шухăшĕпе, çапăçассишĕн кăна çунакан индуссем ирĕклĕ пулма хатĕр мар. Инди хăйĕн çулĕпе епле утĕ-ха, енчен те çынсем вăрçăсăр пуçне нимĕн те курмаççĕ тĕк? Агресси режимĕ колонирен те хăрушăрах пулнине палăртать Ганди.

1922 çулта ăна акăлчансене хирĕç кĕрешнĕшĕн арестлеççĕ. Судра Ганди колонизаторсене питлесе калаçать. Анчах та судья йышăнăвĕ тахçанах хатĕр ĕнтĕ – ултă çул колони. Ирĕксĕрлĕхре ирттернĕ 1922-1924 çулсенче Махатма "Манăн пурнăç" кĕнеке çырать.

## Конструктивлă анархизм

1919-1922 çулсенчи кĕрешӳ путланни кампани вĕçне пăнчă лартнине пĕлтермест-ха. Индуссем Англи экономикисĕрех пурăнма, аталанма пултарнине Ганди тахçанах калать. Çавна май социаллă ыйтусене татса пама та май килĕччĕ. Тĕллевсене пурнăçа кĕртме вырăнти таварсене ытларах сутлăха кăлармалла. Колонизаторсене усă кӳрес çук ку, анчах та вырăнти халăха ĕçпе тивĕçтерĕ. Кĕске вăхăтрах миллион-миллион çын вырăнти фабрика тĕртсе кăларакан пусмаран çи-пуç çĕлесе тăхăнма пуçланă. Нумай тавара промышленноç пысăк предприятисенче мар, пĕчĕккисенчех кăларма пулнине палăртнă Ганди. Çынсем пĕрлĕхсене пуçтарăнма пуçланă – унта çĕр ĕçне пĕрлехи вăйпа пурнăçланă, политика тата тĕн ыйтăвĕсене сӳтсе явнă.

Хĕç-пăшалпа усă курса çынна парăнтарма çуккине çирĕплетнĕ ертӳçĕ. Сăмах вăйĕ вара – чикĕсĕр. Çакă – мирлĕ меслет – ирĕклĕхе туптама кăна мар, çĕнĕ общество, "пусмăрсăр социализм", йĕркелеме те хистенĕ. Вăл агрессиллĕ кирек мĕнле çĕр-шыва хирĕçленĕ. Ганди чун пĕрлĕхĕсен федерацийĕ пирки ĕмĕтленнĕ. Пĕрлĕх ыйтăвĕсене панчăят – сумлă пилĕк çынран тăракан орган – татса памалла пулнă. Вĕсен тĕп меслечĕ тулли демократипе çыхăннă.

1924 çулта, Ганди сывлăхĕ хавшанине кура, ăна ирĕке кăлараççĕ. Чирленине пăхмасăрах вăл тӳрех кĕрешĕве хутшăнать. Çынсене ремесласене аталантарма ӳкĕтлет, тĕн вăрçине сивлет, Инди наци конгресне хӳтĕлет. 1924 çулта мăсăльмансем Кохот хулинче аркату йĕркеленине сивлесе Ганди хăй 21 кун выçă тытассине пĕлтерет. Çакă, чăн та, экстремистсене кăшт тăна кĕртет.

## Çĕр тăварĕ

1928 çулта çĕр-шыв малтанхи тапхăра таврăннине çирĕплетет Ганди. Кампание çĕнĕрен пуçлама колонизаторсем хăйсемех сăлтав тупса панă. Индие ятарлă Саймон комиссийĕ килсе çитет. Вĕсем вырăнти хăй тытăмлăх ĕçне хак парасшăн. Анчах та комисси йышĕнче пĕр индус та çук. Вĕсене унта кĕртме ыйтсан та хирĕçлеççĕ. Çапла 1928 çулта çĕр-шывра хартал пуçланать – пĕрлехи забастовка тата траур демонстрацийĕсем. Хĕнени те, арестлени те çынсене урамран хăваласа кĕртеймест. Пăлхав ялсене те çитет. Хресченсем çакăнпа усă курса налук тӳлеме пăрахаççĕ. Колонизаторсен ирĕксĕрех чакма тивет – вĕсем налуксене пĕчĕклетме йышăнаççĕ. Ганди çĕр-шыв ирĕклĕхшĕн кĕрешме пуçласса пĕлтерет – Англи ыр кăмăллăхĕ иллюзи кăна пулнине ăнланса илет вăл. Британи татах та чакнине пăхмасăрах ИНК çĕнĕ ыйтусем çĕклет – влаç тăвар тĕлĕшпе монополист пулни килĕшмест вĕсене. Çакă Англие пысăк тупăш кӳнĕ паллах – тăварсăр никам та пурăнаймасть вĕт. Ганди монополие пăрахăçлама, налуксене чакарма, политика тĕлĕшĕнчен айăпласа хупса хунисене ирĕке кăларма ыйтать. Влаç килĕшменнине кура каллех сатьяграха пĕлтерет.

1930 çулхи çу-ака уйăхĕсенче Гандипе пĕрле патриотсен пысăк колонийĕ Инди тăрăх 400 çухрăм утса тухать. Ака уйăхĕн 6-мĕшĕнче вăлах çынсене тинĕс патне ертсе каять – вун-вун çын алă вĕççĕн тăвар кăларма пуçлать. Англин Индири экономики лаксах ларать. Пикетчиксене хресченсемпе купсасем апат-çимĕçпе тивĕçтереççĕ. Çынсене пинĕ-пинĕпе арестленинчен нимĕн усси те çук. Çу уйăхĕнче ИНК ертӳçисене, вĕсен хушшинче – Неру та, Ганди те, пурне те тĕрмене хупаççĕ. Ертӳçĕсемсĕр каллех хĕç-пăшаллă пăлхав çĕкленет. Çĕршыв каллех малтанхи тапхăра таврăнать.

Гандие ирĕке кăлараççĕ. Мирлĕ калаçусем пуçланаççĕ. 1931 çулхи пушăн 4-мĕшĕнче Ирвин вице-кĕпĕрнаттăрпа килĕшĕве алă пусма май килет – вăл пĕтĕм ыйтăва тивĕçтерет. Çакă паллă – Британин реформăсемпе çырлахмалли кăна юлать.

Анчах та ку – çул пуçламăшĕ кăна-ха. Алă пуснине пурнăçлама килĕшмеççĕ акăлчансем. Ганди Лондона çитет – çурма çарамас кĕлеткине килте тĕртнĕ пусмапа хупланă арçын хула тăрăх утса çӳрени сенсацие çаврăнать. Анчах та çул çӳрев ăнăçупа вĕçленмест. Каллех выçă тытма пуçлать вăл. Çĕнĕрен кампани йĕркелет.

## Çĕнтерӳ

1936 çулта Англин Индире реформăсем ирттермех тивет. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем йĕркелеççĕ. Суйлавра ИНК çĕнтерет. Иккĕмĕш тĕнче вăрçи вăхăтĕнче хăй тытăмлăхран ирĕклĕх патне çитесси чакать – яппунсем тапăнса килни акăлчансемпе кĕрешес вăя пĕтерет. Ганди каллех икĕ çуллăха ирĕксĕрлĕхе лекет.

Вăрçă чарăннă-чарăнман Инди кĕрешĕве хăватлăн çĕкленет. Забастовкăсемпе пăлхавсем хупласçĕ çĕр-шыва. 1945 çулта Англире влаçра пулнă Эттли правительстви индуссемпе каласу пуçарать, анчах та – хăй тытăмлăх органĕсен ирĕкĕ пирки кăна. Çĕр-шыв чăн-чăн ирĕклĕхе тухасси тăсăлса кайнине кура каллех тĕн вăрçи пуçланать. Мăсăльмансем ĕнтĕ пачах та хăйсен çĕр-шывне йĕркелесшĕн. Акăлчансем вĕсен енне йышăнаççĕ. Анчах та халăх йăлт хутшăнса пĕтнине кура кам хăш тĕн çыннине те пĕлме йывăр пулнă. Ларутăрăва уçăмлатма икĕ енчи экстремистсем те юттисене хăвалама тытăннă. Каллех çапăçусем пуçланнă. Британи çарĕ тухса кайсан Индипе Пакистан хушшинче тĕн вăрçи сиксе тухнă.

Ганди çĕр-шыва ним тусан та пайлама килĕшмен – ку юн юхасси патне кăна илсе ситерессе аван ăнланнă вăл. Анчах та ИНК ертӳçисен пысăк пайĕ Британипе килĕшет. 1947 çулхи çурла уйăхĕн 14-мĕшĕнче Инди союзĕ йĕркеленет. Миллион-миллион çын Пакистанран – Индие, Индирен Пакистана "хăйсен патшалăхне" çул тытать. Çак хирĕçӳре 700 пине яхăн çын вилет.

1948 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче Ганди каллех хăй выçă тытассине пĕлтерет. Хирĕç-тăру вĕçленмесен виличченех апат çимессине калать вăл. Индуссен тата мăсăльмансен ертӳçисем лăпкăлăха тавăрма шантараççĕ. Чăн та, çĕр-шывра тинех мир хуçаланать. Кăрлачăн 30-мĕшĕнче Махатма халăхпа тĕл пулать. Ганди индуссене сутнă тесе шутлакан террорист ăна пăшалтан перет. Махатма вилмеллех аманать...

**/«Саморазвитие1.рф»/.**

**"Турра кĕлĕ туни палăртнă çĕре çиттĕр тата ăнланмалла пултăр тесен сăмахсен тăван чĕлхепе кăна янăрамалла. Пур чĕрĕ чун валли тĕрĕслĕх ыйтса кĕлĕ тунинчен пархатарлăрахи урăх мĕн пултăр?"** ***Махатма Ганди.***





Пĕчĕк хĕр ача амăшне:

– Атя сана юмах каласа кăтартам...

Амăшĕ, сывăрсах кайма пуçланăскер, килĕшет.

– Пурăннă тет пĕр карчăкпа пĕр старик, – пуçлать хĕр пĕрчи. – Иккĕшĕ те 30 çулсенче пулнă...

* * *

Ман ача чăн-чăн арçын пулса ÿсрĕ. Çакă вăл паян ирхине панă ыйтуран лайăх сисĕнчĕ: "Манăн нуски ăçта?"

* * *

– Сирĕн садикре ачасем вăрçăнаççĕ-и? – ыйтать ашшĕ ывăлĕнчен.

– Çапла.

– Мĕн сăлтавпа?

– Тетте пайлаймаççĕ.

– Чи вăйли кам вара?

– Воспитательница.

* * *

Амăшĕ ачине пĕрремĕш хут садике илсе каять. Çула май хайхине вĕрентсе пырать: аслисене итлемелле, мĕн каланине тумалла, ыттисемпе çапăçмалла мар... Ушкăна кĕрсен хĕрарăм малтан воспитательницăпа хăй калаçса илет, унтан ачине çавăтса пырать. Воспитательница йăл кулать те ачана шкап речĕ патне илсе каять:

– Ну, суйла, хăвна хăшĕ килĕшет?

Шăпăрлан сăнран улшăнать, пичĕ тĕксĕмленет. Амăшĕ енне çаврăнса пăхать – лешĕ чĕнмест. Ача груша ÿкерсе хунă шкапа кĕрсе ларать те алăка шал енчен хупать:

– Сывă пул, анне... – илтĕнет шкапран.

* * *

Тăваттăри Ваня велосипед пирки питĕ нумай ĕмĕтленсе пурăнать. Амăшĕ аранах укçа çитерсе çуралнă кун тĕлне парнелет. Иккĕри шăллĕ те парне тавра кускалать:

– Пар, пар, пар!

– Юрамасть, эсĕ ĕмĕтленмен! – касса татать Ваня.

* * *

– Маша, сана садикре арçын ачасенчен кам та пулин килĕшет-и?

– Çапла. Кирилл. Ĕнер вăл ман пукан çине ларчĕ те эпĕ ăна уншăн çыртса илтĕм.

* * *

Виççĕри Любаша асламăшĕ патĕнче пÿртре труççи вĕççĕнех чупса çÿренĕ хыççăн урама тухма пуçтарăнать.

– Хырăм çине мĕн те пулин пăрахса ярăр-ха, – тет хайхи.

* * *

Килте тăваттăри хĕр пĕрчи пур çĕре хăнасем пынă. Ачана пан улми панă. Лешĕ амăшĕн куçĕнчен пăхать, сывăх çынни ирĕк панине кура илет.

– Мĕн каламалла-ха? – тет амăшĕ.

Хĕр ача çухалса каять. Пĕрре пан улмипе хăналакан çине пăхать, тепре – амăшĕ çине.

– Çунă-и? – тет аптранипе.

* * *

– Асанне, атя вылятпăр! – тет виççĕри Настя.

– Атя, анчах та – мĕнле?

– Амăшĕ тата хĕр ачилле.

– Аван. Юрать.

– Эпĕ – амăшĕ, эсĕ – ачи. Нука, ачам, теттÿсене йăлт пуçтар-ха!

* * *

– Анне, мĕн куртăм, мĕн куртăм! Сарайĕнче пилĕк сысна çури улттăмĕшне вĕрсе хăпартаççĕ. Лешĕ капла та темĕн пысăкăш пулса кайнă – кĕçех шаплатса çурăлать...

* * *

Виççĕри Вовочкăна хăлхине тĕрĕслеме больницăна илсе кайнă. Ачана тухтăр хыççăн каласа пыма ыйтаççĕ. "Йытă", – тет шурă халатли. "Йытă", – калать ун хыççăн Вовочка. "Машина". – "Машина". – "Кан-фет". – "Ăçта?" – çухалса каймасть арçын ача.

* * *

Вася çĕр варринче макăрма пуçлать.

– Мĕн пулчĕ? – чупса пырать амăшĕ.

– Нимĕн те. Макăрас килет.

– Ну, макăр эппин.

Ача пĕр самант нăйкăшса ларать. Унтан:

– Пулчĕ, макăрса тăрантăм, халь çывăрас килет, – тет.

* * *

Улттăри Артемка воспитательницăн аллине сăнать.

– Сирĕн чĕрнесем питĕ вăрăм.

– Çапла. Килĕшет-и?

– Килĕшет. Йывăç çине хăпарма питĕ аван-тăр...

* * *

– Анне, кĕрĕкÿ питĕ хитре, мĕн тери килĕшет сана вăл! Эсĕ капла овчарка пекех!

* * *

– Атте, санăн машина авланичченех пулнă-и?

– Пулнă.

– Ун чухне сана кам каласа пынă çул çинче?

* * *

Арçын ачана икĕ попугай туянса панă.

– Ытла та лайăх пурăнатăр эсир, сире те аçăр-аннĕре туянса памалла пулĕ-ха, – тет хайхи пĕррехинче читлĕх патне пырса.

* * *

– Садикре мĕн пулса иртрĕха паян? – ыйтаççĕ хĕр ачаран.

– Гоша авланать.

– Кама качча илет вара?

– Людкăна.

– Людкăна мар – Людăна.

– Сăнсăр вăл. Гошăна манран туртса илчĕ.

– Гоша мĕн, сана качча илесшĕнччĕ-им?

– Сăмаххипе каламан-ха, анчах та куçĕнчен çакна туйса тăраттăм.

**И-ХИ-ХИК**

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРÝСЕМ

### ПРОДАЮ

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т.8-960-301-63-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 89051990122.

**9.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит, чернозём. Т. 89033583021.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Гравмассу, песок, щебень, керамзит,** чернозём, навоз. Дёшево. Доставка. Т. 89276689713.

**15.Кирпич, к/блок.** Т. 89613393363.

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производ-ля: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**19.Гравмассу, песок, керамзит, щебень.** Д-ка. Т. 89033225766.

**20.Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы; кровля, обшивка домов, **навесы.** Д-ка. Установка. Пенсионерам скидки. Т.: 89022881447, 38-75-74, **metalservis21.ru.**

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т. 89176529694, 89276679588.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ, косилки, сажалки, копалки,** окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**33.Гравмассу,** песок, **щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. **Т. 8-937-386-66-29.**

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозем, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**47.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40 от производителя, **цемент** М-500. Т.: 489277, 89033899038.

**48.Керамблоки, кольца** колодезные; всё для **фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. Т. 89063814420.

**53.Отруби, зерно,** к/корм, **сахар, мука.** Доставка. Т. 89373916016.

**58.Гравмассу, щебень,** песок, **керамзит,** бетон, **чернозём,** навоз. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы кованые.** Т. 89276689587.

**73.ПРОФНАСТИЛ, металлочерепицу, сайдинг, водостоки.** Скидки. Замер. Доставка. Монтаж. Т. 8-903-322-04-79.

**77.ТЕПЛИЦЫ: 3х6** – 12000 р., **3х8** – 15000 р. Доставка. Т. 48-16-54.

**117.ОКНА Чувашии.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 8-905-028-11-82.

**124.Песок,** щебень, **гравмассу, керамзит,** торф, кирп. бой, **цемент.** Т.: 89033220479, 48-04-79.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

**158.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 8-927-668-93-03.

**172.Гравмассу,** керамблок, **песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

**178.Гравмассу, песок, цемент.** Д-ка. Т.: 8-927-849-76-75, 8-927-849-76-74.

### ПРОДАЮ

**230.Бетон, раствор,** фундаментные **блоки.** Доставка по Чувашии. Т.: 8-937-391-86-48, 8-927-853-57-32.

**249.БРУСЧАТКУ,** плитку тротуарную, **керамзит, песок** в мешках. Замер. Доставка. Укладка. Т.: 89033220479, 8-903-358-06-79.

**316.Гравмассу,** песок, **керамзит,** щебень, бой кирпича, **к/б блоки.** Доставка. Т. 89051974019.

**317.Гравмассу,** песок, **щебень,** керамзит, **навоз.** Дёшево. Доставка. Т. 8-927-850-28-21.

**323. Песок** карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

**340.Песок,** ОПГС, **щебень,** асфальтную крошку, **торф, навоз;** вывоз мусора. Почасовая работа. Тел.: 89061326378, 484161.

**341.Гравмассу, песок, щебень.** Доставка. Т. 8-903-066-66-30.

### УСЛУГИ

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 89603021293.

**229.Кровля, обшивка домов.** Гарантия. Скидки. Т. 89276687574.

**250.Кровельные, фасадные работы. Монтаж** водостоков. Гарантия. Качество. Т. 89033220479.

**273.Бурение скважин** на воду до 50 м. Т. 8-906-381-60-37.

**419.Доставка керамблоков, песка, ОПГС** – от 10 до 20 тн. Т. 8-987-673-47-54.

### КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

**333.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 89370144997.

### РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

**368.Требуются:** сварщики, монолитчики, арматурщики, монтажники, плотники, разнорабочие, каменщики. Проживание, питание предоставляется. Оформление по ТК, соцпакет. Тел. /**8352/ 37-85-75** /«Альянс-Групп»/.

« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИПЕ МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – А.И.ИЗМАН

Чăваш Хĕрарăмĕ

Сырăнмалли индекс: 11515

Хаçата Федерацин сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, 6 хут, "Чăваш хĕрарăмĕ"
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@chtts.ru

Хаçатри рекламăсăр тÿлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшÿллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 21 сехетре алă пуснă. Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ. Тираж 9294. Заказ 2108.